ПЕТЕМ ТЕНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПЕРЛЕШЕР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Июнь 25 КĔÇНЕРНИКУН № 122 (9031) 36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

СССР Министрĕсен Совечĕ СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заем (1953 çулхи кăларăм) кăларасси çинчен постановлени йышăнчĕ.

Пурте пĕр çын пек пулса заем çырăнса илер, юратнă Тăван çĕршыв хăватне малалла тĕреклетсе пырар!

Государственнăй çĕнĕ заем

Паян пирĕн хаçатра ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заем (1953 çулхи кăларăм) кăларасси çинчен йышăннă постановлени пичетленсе тухать.

Совет правительстви çак çĕнĕ заема СССР халăх хуçалăхне аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана ăнăçлă тултарма укçа-тенкĕ парса тăрас ĕçе халăх укçи-тенкине те хутшăнтарас тĕллевпе кăларчĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ 1951—1955 çулсенче ССР Союзне малалла аталантарма çав тери пысăк ĕçсем туса ирттерме палăртрĕ. Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх планра палăртнă ĕçсене ăнăçлă пурнăçланипе пирĕн çĕршыв социализмран коммунизма куçмалли çулпа аталанса пырса малалла çĕнĕ пысăк утăм тăвать.

Хальхи вăхăтра пирĕн çĕршыври ĕççыннисем Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе коммунизм строительствинчи аслă задачăсене чыслăн пурнăçлаççĕ. Промышленность, транспорт, ялхуçалăхĕ хăвăрт вăйланса пыраççĕ. Çĕршывăн пур кĕтесĕсенче те çĕнĕ фабрикăсемпе заводсем, шахтăсемпе домнăсем ÿссе лараççĕ, чугун çулсем хываççĕ, пурăнмалли çĕнĕ çуртсем, шкулсем, больницăсем, клубсем, вулав çурчĕсем нумай тăваççĕ. Халăх хуçалăхĕ хăватлăн вăйланса пынипе Совет Союзĕн наци тупăшĕ пĕрмай ÿсет, совет халăхĕн пурнăçĕ лайăхланать. Промышленноçпа апат-çимĕç таварĕсен хакне çулсерен йÿнетнипе рабочисен реальнăй ĕç укçийĕ тата колхозниксен тупăшĕ чылай ÿсрĕ. Совет государстви наукăпа культурăна аталантарма, халăха вĕрентес тата сывлăха сыхлас ĕçе лайăхлатма, благоустройство тĕлĕшĕнчен хуласемпе рабочи поселоксене тата ялсене илемлетме укçа-тенкĕ нумай уйăрса парать.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин, мĕнпур совет çыннисен материальнăй пурнăçне йĕрмаях лайăхлатса пыма тăрăшаççĕ. Халăх ырлăхĕшĕн, унăн материальнăй тата культурăлла ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтерсе пырассишĕн тимлĕн тăрăшасси пирĕн партипе правительствăшăн закон пулса тăрать. Çак закона пурнăçлас тесе, партипе правительство обществăлла производствăна вĕçĕмсĕр ÿстереççĕ, уйрăмах производство хатĕрĕсем туса кăларассине ытларах вăйлатаççĕ.

Совет государстви мирлĕ ĕçсен аслă программине ăнăçлă пурнăçласа пырать. Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх планăн малтанхи икĕ çулхи итогĕсем çавна питех те лайăх кăтартса параççĕ. Сăмахран, 1952 çулта пирĕн социализмла промышленность продукци туса кăлармалли плана 101 процент тултарнă. СССР промышленноçĕн пĕтĕм продукцийĕ, 1951 çулхипе танлаштарсан, 11 процент ÿснĕ. 1952 çулта, унччenхи çулпа танлаштарсан, чугун, хурçă, прокат, нефть, электроэнерги туса кăларасси чылай ÿснĕ Иртнĕ çулта совет машиностроенийĕ 600 яхăн паха йышши тата тĕрлĕ маркăллă машинăсемпе механизмсем çĕнĕрен тунă. Çакă вăл халăх хуçалăхĕнче техникăлла прогреса малалла вăйлатма, ĕçе çăмăллатма тата ĕç тухăçлăхне ÿстерме лайăх майсем туса парать.

Куллен кирлĕ таварсем туса кăларакан промышленность та пысăк çитĕнÿсем турĕ. Иртнĕ çулта унччenхи çулхинчен çĕр мамăк, çăм тата пурçăн пир-авăр, тирсăран атă-пушмак ытларах туса кăларнă. Сахăр, выльăх çăвĕ, аш-какай тата ытти апат-çимĕç туса кăларасси те чылай нумайланнă.

Социализмла ялхуçалăх ĕçченĕсен çитĕнĕвĕсем пысăк. 1952 çулта 8 миллиард пăт тĕштырă туса илнĕ. 1951 çулхипе танлаштарсан, пĕлтĕр тулă 23 процент ытларах пухса кĕртнĕ. Çавăн пекех çĕр мамăк, сахăр кăшманĕ, хĕвелçаврăнăш, йĕтĕн тата ытти техникăлла культурăсем нумайтарах туса илнĕ.

Ялхуçалăхне чечеклентерессишĕн пирĕн партипе правительство куллен тăрăшаççĕ. Ăна эпир çакăнтан та аван куратпăр: 1952 çулта пирĕн социализмла промышленность социализмла ялхуçалăхне 131 пин трактор, тĕштырă пухса кĕртмелли 41 пин комбайн, 57 пин грузовой автомобильсем тата икĕ миллион ытла тĕрлĕ машинăсемпе ĕç хатĕрĕсем панă.

Социализмла хуçалăх нихăçанхинчен те пысăкрах тупăш пама пуçланине шута илсе, Совет правительстви СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй çĕнĕ заема 15 миллиард тенкĕлĕх, урăхла каласан, 1952 çулхинчен икĕ хут сахалтарах кăларма йышăнчĕ. Çакă вăл Совет государствин вăй-хăвачĕ, унăн пуянлăхĕ хăвăрт ÿссе пынине, пирĕн Тăван çĕршыв халĕ ытти çулхисенчен темиçе хут вăйлăрах, тĕреклĕрех пулнине кăтартса парать.

Совет экономикипе культурине малалла аталантарма кирлĕ укçа-тенкĕн чи пысăк пайне пирĕн социализмла предприятисемпе хуçалăх организацисем парса тăраççĕ. Çак предприятисемпе организацисенчен государство бюджетне кĕрекен тупăш 80 процентран та иртсе кайнă. Çакă вăл промышленноçпа ялхуçалăхĕ социализмла анлă воспроизводство никĕсĕ çинче хăватлăн аталаннипе кăна пулма пултарнă. Социализм çĕнтернĕ çĕршывра, ĕç хатĕрĕсемпе производство средствисем капитализмла харпăрлăх пулса тăнине тата çынна-çын эксплуатацилессине, ĕмĕрлĕхех тĕп тунă çĕршывра кăна çавăн пек пулма пултарать.

Совет заемĕсем — мирлĕ строительствăн заемĕсем. Ĕççыннисем заем çырăнса илсе, государствăна кивçен паракан укçи-тенки пĕтĕмпех хуçалăхпа культура строительствине малалла вăйлатас, совет çыннисен материальнăй тата культурăллă пурнăçне лайăхлатас ĕçе каять. Çакăнтан эпир Совет государстви мирлĕ политика тытса пынине тепĕр хут уççăн куратпăр.

Капитализмла çĕршывсенче вара пачах урăхла. США-ра, Англире, капитализмла ытти çĕршывсенче заемсем кăларса, ĕççыннисене эксплуатацилемелли тата чуралантармалли çĕнĕ майсем туса хураççĕ. Унта заемсене хĕçпăшалланас, çĕнĕ вăрçă чĕртсе яма хатĕрленес ĕç валли кăлараççĕ. Çакă шултра банкирсемпе капиталистсене чи пысăк услам илме пулăшать. Заем укçине тата заем тăрăх пухăнакан процента витме капитализмла çĕршывсенчи правительствăсем ĕççыннисенчен илекен налогсене ÿстереççĕ, халăха куллен кирлĕ таварсене вĕçĕ-хĕррисĕр хаклантарса яраççĕ, миллионшар рабочисемпе ĕç хресченĕсене вăрă-хурахла çаратаççĕ, çăкăрсăр, кил-çуртсăр тăратса хăвараççĕ.

Советла социализмла строй кашни ĕççынни валли пуян та культурăллă пурнăçпа пурăнма мĕн кирлине пĕтĕмпех туса пачĕ. Совет çыннисен никам пăсма пултараймăн аслă прависене ССР Союзĕн тĕп законĕ çине—Сталинла Конституци çине çырса хунă.

Партипе правительство пурнăçласа пыракан политика совет халăхĕн, кашни ĕççыннин пурнăçне тивĕçтерет. Ленин — Сталин партийĕн шалтипе тулашри политики вăл пирĕн халăхăн политики пулса тăрать. Коммунистсен партине, Совет правительствине, социализмла Тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн хĕрÿллĕн юратни совет халăхне пĕтĕçтерсе тăрать. Çавăнпа ĕнтĕ пирĕн правительство çĕнĕ заем — СССР халăх хуçалăхне аталантармалли заем кăларма йышăннине кашни рабочипе хресчен, кашни интеллигентпа служащи, мĕнпур ĕççыннисем пысăк савăнăçпа кĕтсе илеççĕ. Пирĕн халăх çакна пĕлсе тăрать: халăх хуçалăхĕ мĕн чухлĕ вăйлăрах, совет çыннисен пурнăçĕ те çавăн чухлĕ лайăхрах пулать.

Совет заемĕсем — халăх заемĕсем. Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем кăçал та, ытти çулсенчи пекех, çак çĕнĕ заема пурте пĕр çын пек пулса хаваслăн çырăнса илĕç.

Заем сарас ĕç — политикăлла пысăк ĕç. Вăл хăй тĕллĕн пулса пырасса шанма кирлĕ мар. Заем сарас тĕлĕшпе парти, совет, профсоюз тата комсомол организацийĕсен пĕтĕм вăй хурса ĕçлемелле. Вĕсен ĕççыннисене çĕнĕ заемăн политикăлла пысăк пĕлтерĕшĕ çинчен, заем çырăнса илмелли условисем çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла.

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заема (1953 çулхи кăларăм) пурте çырăнса илер. Çĕнĕ заема çырăнса илнипе Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тавра тачă пĕтĕçсе тăнине, Тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн хĕрÿллĕн юратнине тепĕр хут кăтартса парар.

СССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕТĔНЧЕ

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заем (1953 çулхи кăларăм) кăларасси çинчен

ССР Союзне аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тăрăх палăртнă ĕçсене пурнăçлама укçа-тенкĕ парса тăрас ĕçе халăхăн укçи-тенкине хутшăнтарас тесе, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заем (1953 çулхи кăларăм) 15 миллиард тенкĕлĕх, 20 çуллăха кăларас.

2. Заем облигацийĕсене тата вĕсем тăрăх илекен выигрышсене государство налогĕсем тата вырăнти налогсемпе сборсем хурассинчен хăтарас.

3. СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заем (1953 çулхи кăларăм) кăлармалли условисене, СССР Финанс министерстви хатĕрленисене, çирĕплетес.

СССР МИНИСТРЕСЕН СОВЕЧĔ 1953 ÇУЛХИ ИЮНĔН 24-МĔШĔНЧЕ ÇИРĔПЛЕТНĔ

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заем (1953 çулхи кăларăм) кăлармалли УСЛОВИСЕМ

1. СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заема (1953 çулхи кăларăм) 1953 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1973 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕччenхи срока кăлараççĕ.

2. Заема пĕтĕмпех халăх хушшинче сарма кăлараççĕ. Заем сармалли йĕркене СССР Финанс министерстви кăтартса парать.

3. Заем разрядсем çине пайланать, кашни разрядра 100-шер миллион тенкĕлĕх облигацисем пулаççĕ.

Кашни разрядра—20 000 сери. Кашни разрядри серисен номерĕсем 140 001 номертен пуçласа 160 000 номера çити пулаççĕ.

Кашни серири облигацисем 01 номертен пуçласа 50 номера çити пулаççĕ.

4. Заем облигацийĕсене 500, 200, 100, 50, 25 тата 10 тенкĕлĕх кăлараççĕ.

500 тата 200 тенкĕлĕх облигацисем пĕр серири пилĕк е икĕ çĕршер тенкĕлĕх облигацирен тăраççĕ, вĕсен пилĕк е икĕ номер пулать, вĕсем тăрăх пилĕк е икĕ выигрыш тухма пултарать, çав выигрышсем облигаци çинче çырнă кашни номер çине пĕр вăхăтра тухаççĕ.

50, 25 тата 10 тенкĕлĕх облигацисем 100 тенкĕлĕх облигацисен пайĕсем пулаççĕ тата 100 тенкĕлĕх облигаци çине тухнă выигрышăн тивĕçлĕ пайне (1/2, 1/4, 1/10 пайне) илме право параççĕ.

5. Заем облигацийĕсем тăрăх пĕтĕм тупăша выигрышсемпе тÿлеççĕ.

Выигрышсен пĕтĕм сумми заемăн 20 çуллăх срокĕнче вăтамран кашни çулталăкра 3 процент чухлĕ пулать.

Заемăн çирĕм çуллăх срокĕнче мĕнпур облигацисен 35 проценчĕ выляса илет, облигацисен ытти 65 проценчĕшĕн вĕсен хакĕ чухлĕ укçа тÿлеççĕ.

Выляса илнĕ облигацишĕн тÿлеççĕ те вăл малашнехи вылявсенче пулмасть.

Заемăн 100 тенкĕлĕх облигацийĕ çине 10 000, 5 000, 1 000, 500 тата 200 тенкĕлĕх выигрышсем пулаççĕ, кунта облигаци хакĕ те (100 тенкĕ) кĕрет.

6. Çирĕм çул хушшинче пĕтĕмпе 40 выляв—кашни çул икшер выляв пулса иртет.

Вылявсем 1954 çултан пуçласа, СССР Финанс министерстви палăртнă срокcенче пулаççĕ.

7. Выигрышсен кашни вылявĕнче заемăн кашни разрячĕ çине, урăхла каласан, заемăн кашни 100-шер миллион тенкĕлĕх облигацийĕсем çине, çакăн чухлĕ выигрышсем тухаççĕ:

100 тенкĕлĕх облигаци çине тухакан выигрышсен пысăкăшĕ, облигаци хакне кĕртсе	Выигрышсен хисепĕ: пĕр вылявра	Выигрышсен хисепĕ: пĕтĕмпе 40 вылявра
10 000 тенкĕ	1	40
5 000 тенкĕ	10	400
1 000 тенкĕ	50	2 000
500 тенкĕ	500	20 000
200 тенкĕ	8 189	327 560
Выигрышсен пĕтĕм хисепĕ	8 750	350 000
Выигрышсен пĕтĕм сумми (тенкĕпе)	1 997 800	79 912 000

8. Заемăн выляса илмен облигацийĕсене 1958 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 15 çул хушшинче, заем срокĕ тухиччен, хăйсен хакĕ чухлĕ тÿлесе каялла илеççĕ.

Заемăн кашни 100-шер миллион тенкĕлĕх облигацийĕсенчен: 1958—1963 çулсенче кашни çулах 1 000 000 тенкĕлĕх, 1964—1968 çулсенче—1 900 000 тенкĕлĕх, 1969—1973 çулсенче кашни çулах 9 900 000 тенкĕлĕх каялла илеççĕ.

1958—1972 çулсенче каялла тÿлесе илме тивĕçлĕ облигацисене кашни çул пулса иртекен вылявсенче палăртаççĕ. Вылявсем ирттермелли срокcене СССР Финанс министерстви кăтартса парать.

Каялла тÿлесе илмелли вылявсенче тухман облигацисене 1973 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа тÿлесе илеççĕ.

9. Выляса илнĕ облигацисене, çавăн пекех тата хăйсен хакĕ чухлĕ тÿлесе каялла илмелли облигацисене 1974 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕччен парса, вĕсемшĕн укçа илме пулать; çав срок иртиччен укçа илме ыйтса паман облигацисем хăйсен вăйне çухатаççĕ, вĕсемшĕн укçа тÿлемеççĕ.

СССР Финанс министрĕ
А. ЗВЕРЕВ.

ВЦСПС Президиумĕнче

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заема (1953 çулхи кăларăм) çырăнса илес ĕçе профсоюзсем хутшăнасси çинчен

Профессиллĕ союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕ СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заем (1953 çулхи кăларăм) кăларасси çинчен йышăннă постановление хĕрÿллĕн ырлать.

Çĕнĕ заем пирĕн çĕршыври мирлĕ строительствăра, хамăрăн аслă Тăван çĕршывăн хăватне тĕреклетес тĕлĕшпе пысăк ĕç пулать. Вăл ĕççыннисен материальнăй пурнăçне тата культурăллă шайне малалла ÿстерме пулăшĕ.

Совет халăхĕ Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене малалла вăйлатассишĕн пыракан кĕрешĕве активлă хутшăнать, коммунизм строительствин аслă задачисене пурнăçлама тăрăшса ĕçлет.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисемпе хавхаланса, совет çыннисем пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана тултарас тата ирттерсе тултарас тесе, хамăрăн социализмла Тăван çĕршыва малалла чечеклентерес тесе социализмла ăмăртăва çĕнĕ хăватпа сарса ячĕç.

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем çакна пĕлсе тăраççĕ: Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин материальнăй пурнăçне пĕрмаях лайăхлатса пырассишĕн, пĕтĕм обществăн пĕрмаях ÿссе пыракан материальнăй тата культурăлла ыйтăвĕсене ытларах тивĕçтерессишĕн пĕрмаях хытă тăрăшаççĕ.

Совет государстви халăх пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшса куллен кирлĕ таварсен хакĕсене тăтăшах йÿнетсе пырать, наукăна, культурăна, халăха вĕрентес тата халăх сывлăхне сыхлас ĕçе аталантарма, пурăнмалли çуртсем тума, хуласене, рабочи поселоксене, ялсене лайăхлатма укçа-тенкĕ çултан-çул ытларах расходлать.

Государство заемĕсем тăрăх пухăнакан укçа хамăр çĕршывăн экономикипе культурине малалла аталантарма, совет обществин пурнăçне малалла лайăхлатма кайнине Совет Союзĕнчи рабочисем, колхозниксем, интеллигенци лайăх пĕлсе тăраççĕ.

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕн Президиумĕ профсоюз организацийĕсене СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заема (1953 çулхи кăларăм) рабочисем, служащисемпе интеллигенци, мĕнпур ĕççыннисем хушшинче сарас ĕçе активлă хутшăнма хушать. Профсоюз организацийĕсен çĕнĕ заем пĕлтерĕшĕ çинчен массăсене ăнлантарса парас ĕçе анлăн сарса ямалла тата ĕççыннисен творчествăлла вăй-хăватне коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн мирлĕ ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тумалли çулпа яма тăрăшмалла.

ВЦСПС Президиумĕ çакна çирĕппĕн шанса тăрать: çĕнĕ заем кăларасси çинчен Совет правительстви йышăннă решение пирĕн çĕршыври мĕнпур ĕççыннисем хĕрÿллĕн ырласа йышăнĕç.

Профессиллĕ союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕ профсоюз членĕсене пурне те, мĕнпур рабочисемпе работницăсене, инженерсемпе техниксене, учительсемпе врачсене, ялхуçалăх работникĕсене, наука, литературăпа искусство работникĕсене, совет учрежденийĕсенчи служащисене пурте пĕр çын пек пулса çĕнĕ заема икĕ эрнери ĕç укçи чухлĕ çырăнса илме чĕнет.

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем пурте пĕр шухăшлă пулса заем çырăнса илсе коммунизм строительствине çĕнĕрен вăй хурĕç, хăйсен çирĕп пĕрлĕхне, хамăрăн социализмла Тăван çĕршыва, Совет Союзĕнчи Коммунистсен аслă партине, хамăрăн тăван Совет правительствине вĕçĕмсĕр юратнине тата шанса тăнине тепĕр хут кăтартса парĕç.

Пурте пĕр çын пек пулса çырăнаççĕ

ИШЛЕЙ. (Телефонпа). Районти ĕççыннисем Совет правительстви СССР халăх хуçалăхне аталантармалли заем кăларни çинчен пĕлтернине хапăл туса йышăнчĕç. Пур колхозсенче те митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ.

Машина-трактор станцинче ĕçлекенсен митингне МТС директорĕ А. Чупраков юлташ уçрĕ. Вăл совет заемĕсем Тăван çĕршыв вăй-хăватне тата та ытларах тĕреклетме пулăшни, ĕççыннисен пурнăçне куллен лайăхлатма кайни çинчен калать.

Кĕске хушăрах çĕнĕ заема 15 пин тенкĕлĕх çырăнчĕç, укçине çийĕнчех 11 пин тенкĕ пухрĕç.

Ф. МАЛЫШКИН.

Халăх хуçалăхĕн çĕнĕ ÿсĕмĕсемшĕн

Шупашкарти чăлха фабрикинчи рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем СССР Министрĕсен Совечĕ çĕнĕ заем кăларасси çинчен йышăннă постановление чĕререн ырласа кĕтсе илчĕç.

Çав ятпа фабрикăра нумай çынлă митинг пулчĕ. Фабрикăри партбюро секретарĕ Рябков юлташ КПСС Шупашкар хула комитечĕн секретарьне Швечков юлташа сăмах парать.

— Тăван çĕршыв ÿссе вăйланса пынине эпир хамăр куçпа курса тăратпăр,— тет Швечков юлташ.— Пăхăр-ха Шупашкар çине! Хулара çĕнĕрен çĕнĕ предприятисем, обществăлла çуртсем хăвăрт ÿссе лараççĕ. Шупашкарта республикăри чи пысăк стройка — пир-авăр комбиначĕ ÿсет. Ĕççыннисен пурнăçĕ куллен-кун лайăхланса, культурăланса пырать. Çитес вăхăтра хулара 120 хваттерлĕ çĕнĕ çурт тума тытăнаççĕ.

Каменецкий мастер сăмах илет. Вăл çапла каларĕ:

— Çĕршывра пысăк стройкăсем ÿссе лараççĕ. Çав стройкăсем социализм çĕршывĕнче кăна пулма пултараççĕ. Совет халăхĕ Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн, хăйшĕн ĕçлет, коммунизм çулĕпе çирĕппĕн утать. Эпĕ Совет правительстви çĕнĕ заем кăларасси çинчен йышăннă постановление чун-чĕререн ырлатăп. Пирĕн заемсем, капитализм çĕршывĕсенчи заемсем пек, вăрçа хатĕрленме мар, халăх хуçалăхĕнче çĕнĕ ÿсĕмсем тума пулăшаççĕ.

Каменецкий юлташ фабрика коллективне тата хастарлăрах ĕçлеме, паха продукци туса кăларма чĕнчĕ.

— Эпир телейлĕ вăхăтра пурăнатпăр,— терĕ митингра Дарьева стахановка.— Çĕршывăн ÿсĕмĕсем пире татах та хастарлăрах ĕçлеме хавхалантараççĕ. Эпĕ государствăн çĕнĕ заемне туллин кăмăлпа çырăнатăп.

Митинг хыççăн рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем пысăк хавхаланупа çĕнĕ заема çырăнма тытăнчĕç. Кĕске вăхăт хушшинче пурте заем çырăнса илчĕç.

А. ЖИРНОВ.

Рабочисен хаваслăхĕ

КАНАШ, июнĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Правительство çĕнĕ заем кăларни çинчен пĕлтернĕ хыпар хулара хăвăрт сарăлчĕ. Предприятисемпе учрежденисенче заем кăларнă ятпа митингсем пулса иртеççĕ. Ĕççыннисем çĕнĕ заема пысăк хаваслăхпа çырăнса илеççĕ.

Вагонсем юсакан заводри тимĕрçĕ цехĕнчи рабочисем хĕрлĕ кĕтесе йышлăн пухăнчĕç. Заем кăларнă ятпа пухăннă митинга партбюро секретарĕ Остапиц юлташ уçрĕ. Сăмах цех начальникĕ Черноног илет.

— Партипе правительство ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн куллен тăрăшаççĕ,— тет вăл.—Пирĕн çĕршывра совет саманинче фабрикăсемпе заводсем ÿссе ларчĕç. Строительство ĕçĕсем çуллен вăйланса пыраççĕ. Черноног юлташ малалла совет заемĕсен пĕлтерĕшĕ çинчен, халăх хуçалăхĕ малалла хăвăрт аталанса пыни çинчен калать.

Ун хыççăн заводри паллă тимĕрçĕ И. Никитин юлташ сăмах тухса калать. Вăл 44 çул хушши тимĕрçĕ пулса ĕçлет, сменăри задание куллен 150—200 процент тултарать. Никитин юлташ çапла калать:

— Пирĕн Тăван çĕршыв çуллен çĕнĕ ÿсĕмсем тăвать. Совет саманинче ĕçленĕçемĕн ĕçлес килет. Пуян та савăнăçлă пурăнатпăр эпир, ĕççыннисем. Совет влаçĕ пулăшнипе эпĕ хам ачасене вăтам тата аслă шкулсенче вĕрентме пултартăм. Спасибо тăван партине, Совет правительствине пире тулăх пурнăç туса панăшăн!

Митингра çавăн пекех прессовщик коммунист Панчин, комсомолка Козина, мастер Лукин юлташсем тухса каларĕç. 20 минут хушшинче çак сменăра ĕçлекен рабочисем пурте çĕнĕ заема пысăк хавасланса çырăнса илчĕç.

Г. ИСАЕВ.

Промартель çитĕнĕвĕ

Шупашкар районĕнчи «Большевик» промартель çур çулхи плана срокчен тата чылай ирттерсе тултарчĕ. Артель членĕсем çулталăкри производство планне ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне тултарассишĕн вăй шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Е. Егорова, И. Васильев, Ф. Иванов юлташсем ĕç нормине тăтăшах 150—170 процент тултарса пыраççĕ. С. Миронов юлташ ертсе пыракан бригада çур çулхи задание пилĕк уйăхра ирттерсе пурнăçларĕ.

А. ЯДРИНЦЕВ.

Виçĕ республика ăмăртăвĕ

Колхозсемпе МТС-сем ялхуçалăх ĕçĕсен планне июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарнă (процентпа)

	Мордва АССР-ĕ	Мари АССР-ĕ	Чăваш АССР-ĕ
Силос хывнă	5,3	2,4	0,4
Тислĕк кăларнă (çулталăкри планран)	47,8	51,8	66,5
Тракторсемпе тумалли ĕçсен çулталăкри планне тултарнă	37,6	35,1	35,7
Çĕртме сухине МТС тракторĕсемпе культиваци тунă	23,7	7,2	4,3
Машинăсем юсанă:			
комбайнсем	43,0	57,7	43,9
молотилкăсем	11,5	13,4	17,7
утă çулмалли	81,0	80,0	93,0
15 лаша вăйлĕ кашни тракторпа ĕçленĕ (гектарпа)	191	158	175

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Кадрсемпе ĕçлессине лайăхлатассишĕн

(Парти активĕн районсенчи пухăвĕсенчен)

Куславкка районĕнчи партии активĕн пухăвĕ КПСС Чăваш обкомĕн V-мĕш пленумĕн ĕçĕсем çинчен райком секретарĕ М. Евдокимов юлташ тунă доклада сÿтсе яврĕ.

Докладчик çапла йышăнчĕ: кадрсене суйласа илес, ĕçе лартас тата воспитани парас тĕлĕшпе обком пленумĕнче палăртнă çитменлĕхсем районти парторганизацине пĕтĕмпех пырса тивеççĕ. КПСС райкомĕ ертсе пыракан кадрсемпе ĕçлессине партин XIX-мĕш съездĕ хушнă пек урăхлатса çĕнетмен. Районта кадрсем суйласа илнĕ чухне партилле принципа пăсаççĕ. Парти райкомĕ «Родина», «Динамо» тата Чапаев ячĕпе тăракан колхозсен председателĕсем пулма П. Янчиков, К. Иванов тата Н. Мосолов юлташсене сĕнсе тĕрĕс мар тунă. Асăннă юлташсем райкомпа колхозниксен шанăçне тÿрре кăлармарĕç, çавăнпа иртнĕ отчетпа суйлав пухăвĕсенче вĕсене ертсе пырас ĕçре текех хăвармарĕç. «Красная Волга», Киров ячĕпе, Жданов ячĕпе тăракан колхозсенче юлашки виçĕ çул хушшинче виçшер председатель улшăннă.

Актив пухăвĕ районти ертсе пыракан кадрсем, уйрăмах колхоз председателĕсем, час-часах улшăнса тăни сиенлĕ йăла тесе палăртрĕ. Иртнĕ çулта тата кăçалхи пилĕк уйăх хушшинче ертсе пыракан 159 работник улшăннă. Çакă вăл райком номенклатурине кĕрекен работниксен 37,8 проценчĕ пулать.

КПСС райкомĕ кадрсене çирĕплетесси тата вĕсен резервне тăвасси çине тимлĕн пăхмасть. Номенклатурăна кĕрекен работниксен 14,3 процентне райком бюровĕнче пăхса тухса çирĕплетмен. Хĕрарăмсемпе пултаруллă çамрăксене ĕçе лартасси те çителĕксĕр пулса пырать.

Тухса калакансем палăртнă тăрăх, КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕ чылай чухне партипе государство дисциплинине пăсакан работниксемпе килĕшселараççĕ, кадрсене государство интересĕсене мала хума вĕрентмеççĕ. Пухура Ленин ячĕпе, Энгельс ячĕпе тăракан тата «Новый путь» колхозсен председателĕсене С. Пименов, В. Большов, Н. Краснов юлташсене артель хуçалăхне япăхтарнăшăн, йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлнăшăн хытă критиклерĕç.

Районти предприятисемпе учрежденисенче те кадрсене тĕпчесе вĕренес тата воспитани парас тĕлĕшпе тăтăш ĕçлени çук. Суртсем тăвакан заводра кадрсене çывăх туслă, тăван-хурăнташлă пулнипе ĕçе илеççĕ. Чĕртавар биржин начальникĕ И. Сорокин юлташ биржăри тĕрлĕ вырăнсене хăйĕн тăванĕсене илсе тултарнă, çавна май чылай вăхăт хушши ĕçри çитменлĕхсемпе йĕркесĕрлĕхсене пытарса усранă. Райпотребсоюзра, Чăваштурган Куславкка уйрăмĕнче пĕр ĕçре юрăхсăра тухнă работниксене тепĕр ĕçе лартас сиенлĕ йăлана халĕ те пĕтермен.

Кадрсен ÿсĕмĕпе çирĕплĕхĕ вĕсене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен воспитани панинчен килет. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренме пулнă работниксенчен чылайăшĕ нимĕн те тумарĕç. Вĕсен шутне райпромкомбинат директорĕ И. Ефимов, пристань начальникĕ В. Чупруков, перекет касси уйрăмĕн заведующийĕ И. Федоров юлташсем кĕреççĕ.

Пренире пурĕ 13 çын тухса каларĕ. Вĕсем кадрсене суйласа илсе воспитани парас ĕçри пысăк çитменлĕхсем, çав çитменлĕхсене пĕтермелли майсем çинчен каларĕç.

— Район юлса пынин сăлтавне,—терĕ «Коммунар» колхоз председателĕ А. Степанов юлташ,—кадрсем енчен тишкермелле, мĕншĕн тесен ĕçри ÿсĕм пуринчен малтан кадрсен пахалăхĕнчен килет. Анчах парти райкомĕ тепĕр чухне çавăн çинчен манать. Хуçалăх ыйтăвĕсемпе ытларах вăхăт иртерсе, кадрсемпе куллен-кун ĕçлемест.

Степанов юлташ малалла райисполком председательне Н. Смыков юлташа хăйне тĕрĕс мар тыткаланăшăн тивĕçлипе критиклерĕ. Смыков юлташ административа, бюрократла çул çине тăма пăхать.

МТС директорĕ Г. Захаров юлташ, районта механизаци кадрĕсем çителĕксĕррине палăртса, айăпа колхоз руководителĕсем çине йăвантарма пăхрĕ, кадрсем хатĕрлес тесе, МТС дирекцийĕ мĕн туни çинчен нимĕн те каламарĕ.

Актив пухăвĕнче КПСС Чăваш обкомĕн секретарĕ Н. Шмаков юлташ сăмах тухса каларĕ.

Т. ИВАНОВ.
(Хамăр корр.).

* * *

Ишлей районĕнчи парторганизаци активĕн пухăвĕ КПСС Чăваш обкомĕн V-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен сÿтсе яврĕ.

Райком бюровĕ çамрăк кадрсене ертсе пырас ĕçе хăюллăрах уйăрса лартма тытăнчĕ. Пĕлтĕр тата кăçалхи 5 уйăх хушшинче ертсе пырас ĕçе 137 çынна уйăрса лартнă, ку шутра хĕрарăмсем 9 процент шутланаççĕ.

Анчах, кадрсене суйласа илес, кирлĕ пек воспитани парас ĕçре çитменлĕхсем те сахал мар. Кадрсем час-часах улшăнса тăраççĕ. Юлашки 5 уйăх хушшинче ертсе пыракан работниксенчен 55 çын улшăннă.

Парти райкомĕ уйрăмах колхоз кадрĕсемпе çителĕксĕр ĕçлет. Иртнĕ отчетпа суйлав пухăвĕсенче колхоз председателĕсенчен 13 çынна улăштарнă.

Парти обкомĕн V-мĕш пленумĕ сÿтсе явнă иккĕмĕш ыйту çинчен каласа, Дмитриев юлташ районти колхозсем кăçалхи çуракине ăнăçлăрах иртгернине палăртать. Район çураки планне 104,1 процент, вăл шутра çурхи тулă акмалли задание 108 процент пурнăçланă.

МТС ĕçĕ лайăхланнă, çуракинче тумалли ĕçсен планне иртерсе тултарнă. Анчах МТС руководителĕсем тунă çитĕнÿсемпе лăпланма пăхаççĕ, вĕсем комбайнсемпе молотилкăсене юсас тĕлĕшпе ĕçе кирлĕ пек организацилемен. Чылай колхозсем ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсене юсас ĕçе кая хăвараççĕ.

Доклад тăрăх пренире 13 çын тухса каларĕ.

Пуху сÿтсе явнă ыйту тăрăх тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

В. ЧЕРНОВ.

Парторганизаци секретарĕсен семинарĕ

КПСС Советски райкомĕ колхозсенчи пуçламăш парторганизаци секретарĕсен пĕр кунлăх семинарне ирттерчĕ.

Семинарта парти райкомĕн секретарĕ А. Альянов юлташ партире тăман активпа ĕçлесси çинчен тата райсовет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕн аслă агрономĕ Никитин юлташ колхозсенче ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке çинчен докладсем туса пачĕç. Парторганизаци секретарĕсем пĕр-пĕрин ĕç опычĕпе паллашрĕç.

В. МИХАЙЛОВ.

Николай Иванович Кириллов — Шупашкарти электроаппаратура заводĕнчи ватă рабочисенчен пĕри. Вăл—сборочнăй цехри мастер тата парторганизаци секретарĕ, ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн депутачĕ. Кириллов юлташ ĕçрен пушă вăхăтра марксизм-ленинизм теорине тăрăшса вĕренет.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Н. И. Кириллов юлташ хăйĕн хваттерĕнче.

П. ЕФРЕМОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Электроаппаратура завочĕ çур çулхи плана срокчен тултарнă

Шупашкарти электроаппаратура тăвакан завод коллективĕ çур çулхи производство планне июнĕн 22-мĕшĕ тĕлне тултарма, продукци пахалăхне лайăхлатма, материалсем перекетлеме пулса социализмла обязательствăсем йышăннăччĕ.

Панă сăмаха чысăн пурнăçлассишĕн, производство культурине ÿстерессишĕн, хăватлă техникăпа туллин усă курассишĕн цехсем, участоксем, сменăсем, бригадăсем хушшинче социализмла ăмăрту анлă сарăлса кайрĕ. Ăмăртура виççĕмĕш, иккĕмĕш, тăваттăмĕш сборочнăй цехсем, механически тата фотохимически цехсем уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Вĕсем продукци туса кăлармалли çур çулхи плана июнĕн 17—18-мĕшĕсенче тултарчĕç.

Июнĕн 19-мĕшĕ тĕлне завод таварлă продукци туса кăлармалли çур çулхи плана тултарчĕ. Çапла вара завод коллективĕ панă сăмаха виçĕ кун маларах пурнăçларĕ.

Нумай бригадăсем пысăк пахалăхлă продукци туса кăларассишĕн ăмăртаççĕ. СССР Электростанцисен тата электропромышленность министерствипе профсоюзăн Центральнăй комитечĕ Кусакин, Довгаль юлташсем ертсе пыракан слесарьсен бригадисене, Павловпа Спасова юлташсем ертсе пыракан токарьсен бригадисене пысăк пахалăхлă продукци туса кăларакан бригада ятне памалла тунă.

Завод коллективĕ иккĕмĕш кварталти плана пур изделисем енĕпе те тултарассишĕн, виççĕмĕш квартал пуçламăшĕнче тухăçлă ĕçлеме детальсем нумайрах хатĕрлесе хурассишĕн, СССР Министрĕсен Совечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне хăйĕн аллинчех хăварассишĕн вăй шеллемесĕр кĕрешет.

Н. ШУВАЛОВ.

Хĕрÿллĕ ĕçлеççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Шуршăлти Молотов ячĕпе тăракан колхозăн кăçал Сĕнтĕрвăррипе Сĕрпÿ хушшинчи çул çинче 300 метр тăршшĕ чул сармалла. Кунсăр пуçне, ялтан мăн çул çине тухмалли çулсене юсаса йĕркелемелле, кĕперсем юсамалла.

Çак ĕçсене тума колхозăн 300 кубометр чул, 400 кубометр хăйăр кăларса турттарас пулать.

Ĕçĕ пысăк ĕнтĕ. Çапах та ку ĕçе утă çулма тухиччен туса пĕтерес пулать, çаран çине кайсан, ăна тума вăхăт пулмасть. Утă хыççăнах ыраш та пулса çитет.

Çак шухăш колхоз председательне П. Васильев юлташа тата колхозри пуçламăш парторганизаци секретарьне П. Михайлов юлташа чылайччен канăç паман. Уй-хир бригадирĕсем те, уйрăм колхозниксем те çавăн çинченех шухăшлаççĕ.

Колхоз хăйĕн мĕнпур ерçÿллĕ çыннисемпе лашисене çул çине ĕçе кăларчĕ. Анчах пĕр çакăнпах çырлахма çук-ха, халăхпа канашласа пăхас пулать.

... Çул çинче ĕçлекен колхозниксен пухăвне колхоз председателĕ П. Васильев юлташ уçрĕ. Вăл хăйне канăç паман шухăша каласа пачĕ, плана малтан палăртниччен темиçе кун маларах тултарма май пуррине пĕлтерчĕ.

— Пирĕн çул çинче ĕçлеме сахалтан та 50 лав, виçĕ автомашина кăларма май пур. Çынсене те чылай ытларах кăларма пулать. Анчах та машинăсемпе лавсем пĕр чарăнмасăр ĕçлетчĕр тесен, чул ытларах хатĕрлес пулать, — терĕ председатель.

Пĕрремĕш уй-хир бригадин бригадирĕ А. Николаев юлташ, хăйĕн бригадинчи колхозниксен ячĕпе, пур ĕçе те июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне туса пĕтерме сăмах пачĕ, тăваттăмĕш бригадăри колхозниксене ăмăртăва чĕнчĕ.

Çул-йĕр бригадирĕ А. Демидов юлташ колхозниксене пур ĕçе те июнĕн 25-мĕшĕ тĕлне тултарассишĕн социализмла ăмăртăва вăйлатма чĕнсе каларĕ.

Колхозниксем унăн сĕнĕвĕпе килĕшрĕç, тăрăшарах ĕçлеме сăмах пачĕç, «Светлый путь» колхоз членĕсене ăмăртăва чĕнчĕç.

Колхозниксен сăмахĕ — çирĕп сăмах. Иртен пуçласа каçчен вĕресе тăрать çул çинче хĕрÿллĕ ĕç. Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсен сăмахне срокчен пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ.

Н. СТЕПАНОВ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕнче

Республикăра çул-йĕр строительстви çителĕксĕр пыни çинчен

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ республикăра çул-йĕр строительстви питĕ çителĕксĕр пынине палăртнă. 1953 çулхи июнĕн 15-мĕшĕ тĕлне чул хатĕрлемелли тата турттарса кăлармалли çулталăкри плана 43 процент, йывăç хатĕрлемелли тата турттарса кăлармалли плана — 59 процент, хăйăр турттармалли плана—35 процент, гравипе шлак турттармалли плана—42 процент çеç тултарнă.

Материалсем турттарас тĕлĕшпе уйрăмах Вăрнар, Куславкка, Калинино, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар, Йĕпреç, Етĕрне, Сĕнтĕр тата Шăмăршă районĕсем япăх ĕçлеççĕ. Вĕсем материалсем турттарса кăлармалли плана 25 процентран та кая тултарнă.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ 1953 çулхи майăн 15-мĕшĕнче йышăннă постановленире ялти вăйпитти çынсене, колхозсен транспортне тата предприятисен автомашинисене июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çул-йĕр строительствине массăллăн хутшăнтарма хушса хăварнăччĕ. Çак постановление райисполкомсен нумайăшĕ пурнăçламаççĕ. Июнĕн 1-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче республикăра çул-йĕр строительствине 20.067 çын вырăнне куллен вăтам шутпа 10.780 çын çуран ĕçлекен, урăхла каласан, 54 процент, колхозсен лавĕсем 8.641 лав вырăнне 2.510 лав, урăхла каласан, 29 процент, 810 колхозран 460 колхоз е 57 процент, колхозсен автомашинисем 154 вырăнне 41 автомашина е 27 процент, предприятисен автомашинисем 247 вырăнне пурĕ те 14 автомашина е 6 процент кăна хутшăннă.

Çул-йĕр строительствине ялти çынсене тата колхозсен турттăм вăйĕпе автомашинисене хутшăнтарас ĕçе Сĕнтĕр, Етĕрне, Йĕпреç, Октябрьски, Калинино, Куславкка, Первомайски, Советски, Çĕрпÿ, Шăмăршă, Кувакино, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Çĕмĕрле тата Улатăр районĕсенче уйрăмах япăх организациленĕ. Асăннă районсенче çул çинче çуран ĕçлекенсем тухмалли кулленхи графика 27—45 процент, лавсемпе ĕçлеме тухмалли графика—11—25 процент, автомашинăсене ĕçе хутшăнтармалли графика 4—7 процент таран çеç пурнăçлаççĕ. Асăннă районсенчи райисполкомсен председателĕсем халăха çул-йĕр строительствине хутшăнтарас ĕçрен пăрăнса тăраççĕ, çак пысăк ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанаççĕ, çавна пула государство çул-йĕр ĕçĕсем енĕпе çирĕплетсе панă план пурнăçланса пымасть.

Хăшпĕр предприятисемпе организацисен руководителĕсем хăйсен тивĕçне çав-çавах ăнланса илмен, çул-йĕр органĕсем строительство материалĕсем турттарма панă задание пурнăçлама хăйсен автомашинисене хутшăнтармаççĕ.

Çул-йĕр ĕçĕсене çавăн пек хакламаннипе çĕр чавса купаламалли çулталăкри плана 46 процент, тăпра çулсем çĕнĕрен тумалли тата киввисене юсамалли плана—31 процент, чул сарса çул тумалли тата юсамалли плана—13 процент, кĕперсемпе трубасем тумалли тата юсамалли плана—31 процент, шлакпа грави сарса çĕнĕ çулсем тумалли тата киввисене юсамалли плана 12 процент çеç тултарнă. Ялти вăйпитти çынсене çул-йĕр ĕçне хутшăнтармалли плана 32 процент кăна тултарнă.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. Калинино райисполкомĕн председательне Данилов юлташа, Етĕрне райисполкомĕн председательне Кочергина юлташа, Кувакино райисполкомĕн председательне Леонов юлташа, Йĕпреç райисполкомĕн председательне Васильков юлташа, Сĕнтĕр райисполкомĕн председательне Петров юлташа, Шăмăршă райисполкомĕн председательне Васильев юлташа, Куславкка райисполкомĕн председательне Смыков юлташа вĕсем çул-йĕр строительстви енĕпе питĕ çителĕксĕр ĕçленине асăрхаттарнă тата çак ĕçе хăвăрт лайăхлатма хушнă.

2. Райисполкомсен председателĕсене çапла тума хушнă:

а) Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ 1953 çулхи майăн 15-мĕшĕнче йышăннă постановление пурнăçлас тĕлĕшпе тимлĕрех ĕçлемелле, ялти вăйпитти çынсене, колхозсен турттăм вăйĕпе автомашинисене, предприятисемпе организацисен автомашинисене çул-йĕр строительствине массăллăн хутшăнтармалла, çул-йĕр ĕçне ĕç вăйĕпе турттăм вăйĕ кулленех Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çирĕплетсе панă графикран кая мар кăлармалла;

б) пилĕк кун хушшинче исполкомăн черетсĕр пухнă ларăвĕсенче халăха тата колхозсен турттăм вăйне çул-йĕр строительствине хутшăнтарман ял Совечĕсемпе колхозсен председателĕсен доклачĕсене итлесе сÿтсе явмалла, вăйпитти колхозниксене çул-йĕр ĕçне хутшăнтармалли плана пур колхозсем енĕпе те 1953 çулхи июлĕн 15-мĕшĕччен тултармалла;

в) ял Совечĕсен председателĕсене халăха тата колхозсен транспорт хатĕрĕсене çул-йĕр строительствине хутшăнтармалли плана тултарма хушнă; РСФСР Министрĕсен Совечĕ 1946 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнче йышăннă тăрăх халăха çул-йĕр строительствине хутшăнтарассишĕн ял Совечĕсен председателĕсем ответлă пулни çинчен вĕсене пурне те асăрхаттармалла;

г) колхоз председателĕсене çакăн çинчен асăрхаттарнă: çул-йĕр ĕçĕсенчен пăрăнса тăнăшăн колхозсенчен туса çитерайман ĕçсемшĕн икĕ хут хаклăрах шыраса илеççĕ;

д) Тăвай районĕнчи колхозниксем çул-йĕр ĕçĕсен çулталăкри планне срокчен тултарма чĕнсе каланине колхозсенче пурин те сÿтсе явма тата çул-йĕр строительстви планне срокчен тултарассишĕн социализмла ăмăртăва анлăн организацилеме хушнă.

3. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Çул-йĕр тата транспорт хуçалăх управленине тата райисполкомсене çул-йĕр ĕçĕсене утă çулма тата тыра вырма тухиччен туса çитерме, республикăн пĕтĕм территорийĕнчи çулсене юсаса лайăхлатма хушнă.

4. Министрсене, управлени начальникĕсене, ведомствăсемпе организацисен руководителĕсене материалсем турттармалли плана тултарма хăйсене пăхăнса тăракан предприятисемпе организацисенчи груз турттармалли автомашинисене халех çул-йĕр органĕсен аллине вăхăтлăха уйăрса яма хушнă. Çакна пурнăçлани çинчен 1953 çулхи июнĕн 23-мĕшĕнчен кая юлмасăр Чăваш АССР Министрĕсен Советне пĕлтерме хушнă.

5. Çак постановление пурнăçлани çинчен райисполкомсене Чăваш АССР Министрĕсен Советне 1953 çулхи июлĕн 15-мĕшĕнче пĕлтерме хушнă.

Совет çыннисен сыхăлăхĕ пысăк пултăр!

Кăçалхи июнĕн 21-мĕшĕнче «Правда» хаçатра «Совет çыннисен сыхăлăхĕ пысăк пултăр!» ятлă умстатья пичетленсе тухнă. Умстатьяра çапла каланă:

— Совет çĕршывĕнчи халăхсем мирлĕ ĕçе пикеннĕ. Коммунистсен партийĕ совет çыннисен иксĕлми вăйне хамăрăн Тăван çĕршыв хăватне ывăнма пĕлмесĕр тĕреклетес, обществăлла производствăна аталантарса тата лайăхлатса пырас, çак никĕс çинче ĕççыннисен пĕрмаях ÿссе пыракан материаллă тата культурăллă ыйтăвĕсене ытларах тивĕçтерес çулпа илсе пырать.

Совет çыннисем, хуçалăхпа культура строительствинче çĕнĕ çитĕнÿсем туса, пĕтĕм тĕнчери мир ĕçне тĕреклетеççĕ. Ку вăл çапла пулмалла та: пирĕн Тăван çĕршыв мирĕн çирĕп тĕрекĕ, çĕнĕ вăрçă хатĕрлессине тата сарса ярассине пÿлсе тăракан тĕп чăрмав пулать.

Мĕнпур халăхсем нумай вăхăтлăха çирĕп мир пултăр тесе шутлаççĕ. Совет Союзĕн политики çакна тĕп вырăна хурать: тĕнчери пурнăçра мирĕн татса пама май килмен тавлашуллă пĕр ыйту та çук. Çавăнпа ĕнтĕ мир интересĕсене хакла хуракан çынсем пурте Совет Союзĕн политикине хĕрÿллĕн ырлаççĕ. Анчах тĕнчере реакциллĕ вăйсем пур, вĕсем хăйсен умне тавлашуллă ыйтусене мирлĕ майпа татса парассине пĕтерсе хума валача лартаççĕ, вĕсем тĕнчери йывăр ларутăрăва çăмăллатасшăн мар. Çав реакциллĕ вăйсем хăйсен хура ĕмĕчĕсене пурнăçлас тесе тем те тума хатĕр, вĕсем тем тĕрлĕ майсемпе усă курма чăрăнса тăмаççĕ. Кун çинчен, уйрăммăн илсен, агрессиллĕ Атлантика блокĕнчи государствăсен: ин малтан Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен, разведка органĕсем Совет Союзĕпе ытти мире юратакан демократиллĕ çĕршывсене хирĕç сăтăрла ĕçсем туса пыни калать.

Çаксем пурте совет çыннисене сыхăлăха пур майсемпе те ÿстерсе пыма, империалистла разведкăсен ирсĕр ĕçĕсене пĕрмаях сивĕччĕн сăнаса тăма хушаççĕ. Сыхăлăха ÿстересси çинчен сăмах пынă чухне пирĕн çакна асра тытас пулать: халĕ ĕнтĕ урăх çĕршывсенчи разведкăсем хăйсене валли пирĕн çĕршывра мĕн чухлĕ те пулин пысăк социальнăй тĕрек тупма пултараймаççĕ. Çавăнпа та урăх çĕршывсенчи разведка органĕсем ССР Союзне хирĕç сăтăрла ĕçсем тумалли планĕсенче тĕрлĕ йышши ирсĕр çынсем, Тăван çĕршыва сутакан, фашистсемшĕн ĕçлесе тăнă, гестапо аллинчен Америка разведки аллине куçнă çынсем çине таянма пăхаççĕ.

Урăх çĕршывсенчи разведка органĕсем ССР Союзне хирĕç сăтăрла ĕçсем тăвакан агентсене шыранă чухне «куçса кайнă» текен çынсен лагерĕсем çине уйрăмах тимлĕ пăхаççĕ. Çав лагерьсенче тыткăна лекнĕ çар çыннисем пулнисене тата вăрçă вăхăтĕнче фашистла-нимĕç оккупанчĕсем ССР Союзĕнчен ирĕксĕр илсе кайнă граждансене халĕ те вăйпах тытса усраççĕ. Çав çынсен пурнăçĕ питĕ начаррипе усă курса, вĕсене Америка разведкин офицерĕсем тĕрлĕ майпа пусмăрласа-улталаса, мĕн те пулин парса, суя сăмахсемпе улталаса тата ытти майсемпе те хăйсен Тăван çĕршывне хирĕç разведка тума тата сăтăрла ĕçсем тума хутшăнтарасшăн.

Унтан ирсĕртерех ĕç пулма пултарассине ăнама те йывăр. Совет Союзĕ, США, Англи тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вăхăтĕнче союзниксем пулнă, çав вăрçăра совет халăхĕ, тĕнчери цивилизацине культурăна фашистла тискĕр кайăксенчен çăлса хăвармалли кĕрешÿре тĕп йывăрлăхне тÿссе ирттерсе, вăрçăра питĕ пысăк çухатусем тÿснĕ. Халĕ ĕнтĕ США разведка органĕсем вăрçă вăхăтĕнче пĕрлехи тăшман—гитлеровецсен çарĕсем Совет Союзĕнчен хăваласа кайнă çынсене, çавăн пекех тата хăйсен ирĕкĕпе фашистсене пулăшнă çынсене те ССР Союзне хирĕç сăтăрла ĕçсем тума хутшăнтарасшăн!

Америка разведки пухнă çынсене Хĕвеланăç Европăра ятарласа уçнă «шкулсенче», уйрăмах Германин Америка оккупацилесе тăракан пайĕнче вĕрентеççĕ. Çав çынсене унта диверсисем, террор, шпионаж тума, çынсене вĕлерме вĕрентеççĕ. Унтан вара сăтăр тăвакансемпе çынвĕлерексене хĕçпăшал, ядсем, радиопередачиксем, суя документсем параççĕ те, Америка самолечĕсем çинчен пирĕн çĕршыв территорине антарса хăвараççĕ.

Пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, çавăн пек фактсенчен пĕри кăçалхи апрель вĕçĕнче пулнă. Америкăн ятарласа хатĕрленĕ самолетне, самолет çине вăл хăш çĕршывăн пулнине пĕлмелли паллăсем тумасăр, Украина ССР территорине янă, ун çинчен питĕ лайăх хĕçпăшалланнă 4 бандита антарса хăварнă, вĕсене Америкăн Мюнхен патĕнчи шпионажпа диверси «шкулĕнче» вĕрентсе хатĕрленĕ.

Ку ĕç çинчен ССР Союзĕн Шалти ĕçсен министерстви пичетлесе кăларнă пĕлтерÿрен çакă паллă: Америка лазутчикĕсене тытнă, арестленĕ тата СССР Верховнăй Сучĕн Çар коллегийĕ йышăннă приговор тăрăх персе пăрахнă. Урăх çĕршывсен разведка органĕсем пирĕн çĕршыва кĕртсе яма хăтланакан мĕнпур шпионсемпе диверсантсен шăпи çавăн пек пулать!

Пирĕн территори çине ятарласа вĕрентнĕ шпионсемпе çынвĕлерексем яни Америкăн разведка органĕсем Совет Союзне хирĕç анлăн туса пыракан сăтăрла ĕçĕн пĕр пайĕ çеç. Çав сăтăрла ĕçсене тума США-ри паллă реакциллĕ ушкăнсем хавхалантарса тата хĕтĕртсе тăраççĕ.

1951 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнче США конгресĕ «Хăрушсăрлăх туса хума пĕр-пĕрне пулăшмалли закон» йышăннă. Çав закон тăрăх США правительстви Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсен территорийĕнче сăтăрла-диверсилле ĕçсем тума 100 миллион доллар уйăрса панă. США конгресĕ çавăн пек закон йышăнни çинчен пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăрать. Тĕнчери общественность çав закон тĕнчери правăна тата государствăсем хăйсене кирлĕ пек пурăнмалли йĕркесене сĕмсĕррĕн пăсни пулать, ку вăл çĕршывсем пĕр-пĕринпе йĕркеллĕ хутшăнса пурăнассипе килĕшсе тăмасть, тесе тĕрĕс шутларĕ.

Мире юратакан государствăсемпе пĕтĕм тĕнчери общественносăн анлă ушкăнĕсем протестленине пăхмасăр, сăтăрла ĕçсем тума укçа уйăрса памалли закона çине тăрсах пурнăçласа пыраççĕ. Унтан та ытларах, США конгресĕ 1952 çулхи июнĕн 20-мĕшĕнче йышăннă çĕнĕ закон тăрăх, 1951 çулхи закон тăрăх уйăрса панă укçана малалла расходлама палăртнă, çавăн пекех тата сăтăрла-шпионла ĕçсем тума Çурçĕр Атлантика союзне уйăрса панă укçаран кирек мĕн чухлĕ те расходлама ирĕк панă. Юлашкинчен, нумай та пулмасть-ха, 1953 çулхи майăн 5-мĕшĕнче, США правительстви çитес финанс çулĕнче урăх государствăсене çар пулăшăвĕ парасси çинчен законопроект хатĕрлесе конгреса пăхса тухма тăратнă. Çак законра та Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç диверсилле тата сăтăрла ĕçсем тума укçа уйăрса пама палăртса хунă. Çак кунсенче, июнĕн 13-мĕшĕнче, Америкăри Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтернĕ: США правительстви, халăха пĕлтермесĕр ĕçлесе пырса, Азири «коммунизма хирĕç вăрттăн ĕçсем туса пыракансене» укçа парса тăма конгресран малтанлăха килĕшÿ илнĕ. Сенатпа представительсен палатин «урăх государствăсене пулăшу памалли» законопроекта пăхса тухакан комиссийĕсем çав ĕç валли 95.700 пин доллар уйăрса парассине ырланă, ку укçапа Азире тата Европăра усă курмалла.

«Хăрушсăрлăх туса хума пĕр-пĕрне пулăшмалли закон» мĕнле тĕллев тытни çинчен США-ри буржуалла пичет те уççăнах çырать. Çапла, сăмахран, Америкăри «Стар леджер» хаçатăн çар обозревателĕ Леонард Нэсон çапла çырнă: «США тимĕр занавес леш енче шпионажпа диверсисем туса пынине эпĕ питĕ лайăх пĕлетĕп. Пирĕн диверсилле ĕçсем питĕ анлăн сарăлса кайнă, мире ку ĕçре час-часах алăран ярса тытни çавăнтан килет». США-ри республиканецсен партийĕн паллă деятелĕ, Нью-Йорк штачĕн губернаторĕ Дьюи «Совет Союзне хирĕç шпионла ĕçсем тумалли лайăх система» туса хума уççăнах чĕннĕ. Вăл ку ĕçе тунă чухне США-н хăйне кам пулăшнине тиркесе тăмалла мар, тенĕ. Америка конгресĕнче те çавăн пек уççăнах каланисем темиçе хут та пулнă.

Çакна та палăртас пулать: США-ри реакциллĕ ушкăнсем, Америка разведки пирĕн çĕршыва хирĕç сăтăрла ĕçсем тăвассине хавхалантарса ертсе пыракансем, хăшпĕр чухне проповедниксем пек пулса «мораль», «гуманность», «нравственность нормисем» çинчен суеçтерсе калаçма та вăтанса тăмаççĕ.

Çавнашкал господăсенчен çакăн пек ыйтма тивĕçлĕ: тыткăна лекнĕ çар çыннисем пулнисене, лагерьсенче вăйпах хăварнă тата урăх çĕре куçарнă çынсене шпионсемпе диверсантсем пулма илни, киревсĕр майсемпе хăтланса çав çынсене Тăван çĕршыва сутакансем туса хума тăрăшни, Америка разведки вăрттăн вырăнсенче çав çынсене сăтăрла ĕçсем тата çын вĕлерекенсем пулма хатĕрлени, унтан вара çав çынсене вĕсем сутнă çĕршыв территорине кĕртсе яни, унта шпионла сведенисем пухма, заводсене сирпĕнтерсе яма, çынсене вĕлерме хушни мораль тĕлĕшĕнчен лайăх пулать-ши? Ку вăл мораль тĕлĕшĕнчен юрăхлă шутланать пулсан, вара мораль тĕлĕшĕнчен юрăхсăр, преступлени туни тесе мĕне шутламалла-ши?

Паллах ĕнтĕ, реакциллĕ буржуалла политиксене «гуманность» тата «мораль» çинчен каласнисем империалистла разведчиксем мире юратакан государствăсене хирĕç тăвакан сăтăрла ĕçсене пытарса тăма çеç кирлĕ. Вĕсем çавнашкал суя проповедьпе халăхсен сыхăлăхне петересшĕн, мир тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсене хирĕç кĕрешме халăхсем хатĕр тăнине хавшатасшăн. Çакăнтан ĕнтĕ акă мĕнле вывод тухса тăрать: мире сыхласа хăварассишĕн тата çирĕплетессишĕн кĕрешме сыхăлăха мĕнпур майсемпе ÿстерсе пыни кирлĕ.

Империалистсен паллă ушкăнĕсем, хăйсен ирсĕр ĕмĕчĕсене пурнăçлас тесе, тĕнчери лару-тăрăва йывăрлатса пыма тăрăшнине совет çыннисем пĕлсе тăраççĕ. Империалистсем тĕнчери лару-тăрăва йывăрлатас тесе темтепĕр тума хатĕр. Çавăнпа ĕнтĕ пирĕн çынсен мир тăшманĕсен ирсĕр ĕçĕсене сивĕччĕн те ывăнма пĕлмесĕр сăнаса тăмалла.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ ĕççыннисене политика тĕлĕшĕнчен сыхă пулма воспитани парасси, шалти тата тулашри тăшмансене хирĕç пысăк çирĕплĕхпе кĕрешсе пыма воспитани парасси хăйĕн чи кирлĕ задачисенчен пĕри пулать, тесе шутлать. Парти çапла вĕрентет; Совет çĕршывĕнчи кашни çыннăн кирек мĕнле участокра та тата кирек мĕнле лару-тăрура та яланах сыхă пулмалла, Совет государстви интересĕсене сивĕччĕн сыхламалла, хамăрăн Тăван çĕршывăн хăрушсăрлăхне мĕнпур вăйпа çирĕплетсе пымалла.

Политикăлла сыхăлăха мĕнпур майсемпе ÿстерсе пырса, совет çыннисем малашне те империалистла разведкăсен киревсĕр ĕçĕсене çирĕппĕн пĕтерсе пырĕç, пирĕн çĕршывра коммунизм строительствине чарса лартма хăтланнисене, мире сыхласа хăварас тата тĕреклетес ĕçре чăрмантарма хăтланнисене пĕтерсе пырĕç.

Ют çĕршывсене тара кĕрĕшнĕ çынсен Берлинри авантюри путланса ларни

Ют çĕршывсене сутăннă провокаторсен Берлинри авантюри тата Ли Сын Ман ушкăнĕсен провокациллĕ ĕçĕ тĕнчери мĕнпур çĕршывсенчи ĕççыннисен анлă сийне тарăхтарчĕç. Нимĕн иккĕленмелли те çук, çĕр чăмăрĕн тĕрлĕ кĕтесĕсенче пулса иртекен çак ĕçсем пĕр-пĕринпе уйрăлми таччăн çыхăнса тăраççĕ. Кунта миртен хăракан, мире хирĕç тăракан, тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатас ĕçе хирĕç тăракан мир тăшманĕсен, реакциллĕ ушкăнсен ĕçĕ çинчен сăмах пырать.

США-ри, Англири, Хĕвеланăç Германири тата ытти хăшпĕр çĕршывсенчи реакциллĕ хаçатсем çак кунсенче июнĕн 17-мĕшĕнче Берлинра пулса иртнĕ ĕçсене пăсса кăтартас тĕлĕшпе анлă пропаганда сарса ячĕ. Çак хаçатсем ĕççыннисен анлă массине мĕн пулса иртнине тĕрĕс ăнланса илме парас мар тесе, çавăн пекех тата Берлинри авантюрăна организацилесе хавхалантарса тăнă вăйсен провокаторла ĕçĕсене ĕççыннисенчен пытарса хăварас тесе пĕтĕм вăйя хураççĕ.

Фактсем çакăн çинчен калаççĕ: июнĕн 17-мĕшĕнче Берлинра пулса иртнĕ провокацие хĕвеланăç державăсенчи реакциллĕ ушкăнсемпе Хĕвеланăç Германири монополистсем малтанах тĕплĕн хатĕрленнĕ пулнă. Вĕсем хăйсен киревсĕр ĕмĕчĕсене пула мир ĕçне путлантарса лартасшăн, çĕршывсем хушшинче хирĕçÿсем тăвасшăн, халăхсем хушшинче пăлхав кăларасшăн.

Берлинăн демократиллĕ секторĕнчи провокаци вăл Германи ыйтăвне мирлĕн татса парассинчен хăракан, Германи халăхĕн демократиллĕ вăйĕсем тĕрекленессинчен хăракан, Демократиллĕ Германи Республикин çитĕнĕвĕсене курайман çынсен ĕçĕ пулса тăрать.

Нимĕç халăхĕн Берлинри хĕвеланăç секторĕсенче, пуринчен ытла Америка секторĕнче, йăва çавăрнă тăшманĕсем Демократиллĕ Германи Республикине пырса çапма чылайранпах хатĕрленсе тăнă. Хĕвеланăç Германире тухса тăракан «Дер шпигель» журнал пĕлтернĕ тăрăх, Аденауэрăн сылтăм алли пулса тăракан Бонн министрĕ Кайзер иртнĕ çулхи март уйăхĕнчех: «тĕп план хатĕр теме пулать», палăртса хунă кун «скептиксем шанма пултарнинчен те хăвăртрах килсе тухма пултарать», тесе мухтаннă. Берлинри провокацие çав этем ертсе пынă. Çакăн пек калама та сăлтавсем çителĕклĕ: Берлинра ирсĕр провокаци тума хатĕрленнине Англипе Францин оккупациллĕ влаçĕсем те пĕлсе тăнă.

Июнĕн 17-мĕшĕнчи йĕркесĕрлĕхе пуçарнă çынсене чылайăшне тытнă. Вĕсем каласа панă тăрăх, провокаци Америка çар влаçĕсем тÿртен ертсе пынипе пулса иртнĕ. Фашистла авантюристсен кĕтĕвĕ Берлинăн Америка секторне пухăнса тăнă. Америка офицерĕсем долларла тара тытнă пуçкасансем вут тĕртмелли тата тапăнмалли çуртсене кăтартса панă. Провокаци пулнă кун тытса чарнă ирсĕрсенчен пĕри Вернер Кальковский допросра çапла каланă: «Эпир правительство çурчĕсем çине тапăнма, вут тĕртме, магазинсене çаратма, халăх полицийĕсем çине тапăнма, пĕр сăмахпа каласан, власть органĕсем çине хĕçпăшалпа тапăнма задани илтĕмĕр».

Хăйсен айăпне кăтартакан ĕçсене пытарса хăварас тесе, Берлинри провокаци организаторĕсем июнĕн 17-мĕшĕнче Берлинра пулса иртнĕ йĕркесĕрлĕхсене «нимĕç халăхĕн туйăмне» кăтартакан ĕç вырăнне хума пăхаççĕ. Çак господасене çапла ыйту пани вырăнлă пулмалла: йĕркесĕрлĕхсем пуçланнă тĕле çуртсене вут тĕртме бензин тултарнă бутылкăсем тиенĕ Америка грузовикĕсем Берлинри Совет секторĕн чиккисем патне пырса тăни «нимĕçсен туйăмĕпе» хăш енчен çыхăнса тăма пултарать? Америка репродукторĕсене çак чикĕсем патне пăлхав кăларма хĕтĕртес тĕллевпе илсе пыман-и вара? Предприятисенчи ĕçе чарса лартма чĕнекен малтанах хатĕрлесе хунă листовкăсене демократиллĕ сектор çине Америка самолечĕсем пăрахман-и вара? Демократиллĕ Германи Республикин премьер-министр заместительне Отто Нушкене вăрласа каяс ĕçе Америка полицийĕ тÿртен хутшăнман-и вара?

Берлинăн демократиллĕ секторĕнче провокаци организациленĕ çынсем чăнлăха пытарма пултараймĕç. Пĕтĕм тĕнчешĕн паллă пулса тăнă фактсем, июнĕн 17-мĕшĕнчи ĕçе йĕрлесе пĕлнинчен тухса тăракан фактсем çакăн çинчен калаççĕ: çак кун мир тăшманĕсем Германи столици урамĕсенче Германи халăхĕн тĕп интересĕсене хирĕç, пĕтĕм тĕнчери мир ĕçне хирĕç пысăк провокаци тунă.

Халĕ çакă пур енчен те паллă пулса тăчĕ: ют çĕршывсене тара кĕрĕшнĕ çынсен Берлинри авантюрине тахçанах хатĕрленĕ пулнă. Ку ĕçе США конгресĕ 1951 çулта Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсене хирĕç сăтăрла ĕçсем туса пыма Америка разведкине уйăрса панă çĕр миллион доллар укçа шучĕпе туса пынă. Çак укçа шучĕпе шысмакланнă агентсем Берлинра фашистла пăлхав кăларма тăрăшнă та ĕнтĕ.

Англири буржуалла хаçатсем те çак провокаци хĕвеланăçĕнчи державăсем пĕтĕм вăя хурса хатĕрленипе пулса тăнă ĕç, тесе çыраççĕ. Англире тухса тăракан «Экономист» журнал: çакăнта эпир Би Би Си, «Америка сасси» тата «Ирĕк Европа» текен радио пропаганди нумай çулсем хушши пулăшса пынипе пулса тăнă ĕçе куратпăр, тесе çырнă. «Нью стейтсмен энд нейшн» журнал çапла çырать: «Хĕвеланăçри державăсем пăлхав хăй тĕллĕн пулнă тесе каланине çак енчен ăнланас пулать: çакăн пек ĕç тăвас тесе, пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, агентсемпе радиопропаганда валли миллионшар доллар расход кăларнă».

Çакна ăна Англи хаçачĕсем кăна мар, Америка хаçачĕсем те йышăнаççĕ. Юнайтед Пресс агентстви июнĕн 18-мĕшĕнче пĕлтернĕ тăрăх, США конгресĕн хăшпĕр членĕсем Берлинра пулса иртнĕ йĕркесĕрлĕх «США пропаганда тĕлĕшпе тата правительствăн вăрттăн фончĕсемпе усă курнипе» пулнă ĕç тесе шутлама хатĕр. Сенатор Поттер çапла каланă: Берлинăн демократиллĕ секторĕнчи ĕçсем, хăй вăхăтĕнче ют çĕршыв агенчĕсем Чехословакире туса ирттернĕ авантюра пекех, ăнсăртран пулса тухнă ĕçсем мар, вĕсене США тăрăшнипе хавхалантарса тăнă.

Нимĕн иккĕленмелли те çук, Берлинри авантюрăна ют çĕршывсенчен хавхалантарса тăман пулсан тата океан леш енчи паллă ушкăнсем миллионшар доллар укçа парса пулăшман пулсан, çак авантюра хăй те пулма пултарайман.

Çакна май акă мĕн хытă тĕлĕнтерет. Малтанах шутласа хунă авантюра путланса ларсан, президент Эйзенхауэр июнĕн 18-мĕшĕнче США Хĕвеланăç Берлина татах 50 миллион доллар укçа парса пулăшасси çинчен пĕлтернĕ. Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ку укçана «Хĕвеланăç Берлин экономикине малалла вăйлатма» параççĕ. Анчах та Берлинра çак пулăшăва путланса ларнă Америка агенчĕсене хавхалантарма параççĕ, тесе шутлаççĕ.

Берлинăн демократиллĕ секторĕнче пулса иртнĕ йĕркесĕрлĕхсене хăй тĕллĕн илмелле мар. Ют çĕршывсене сутăннă ирсĕрсен авантюри Ли Сын Ман Кăнтăр Корейăра тунă провокаципе тÿртен çыхăнса тăрать.

Фашистла каварçăсен Берлинри авантюрипе Ли Сын Манăн Корейăри авантюри тĕнчери лару-тăру çăмăлланма пултарасси паларнă вăхăтра пулса иртни вăл ăнсăртран килсе тухнă ĕç мар.

Паньмыньчжонра тыткăнри çар çыннисене репатриаци тăвасси çинчен калаçса татăлнă. Корейăра çак кунсенчех перемири тума май килнĕ. Анчах та Корейăра вăрçă чарăнни мире хирĕç тăракансене çурастарма пултараймасть. Корейăра перемири тăвассине чăрмантарас шутпа реакциллĕ элементсем киревсĕр провокаци турĕç. Июнĕн 18-мĕшĕ умĕнхи каç Америка командованийĕн контролĕнче тăракан Масанри, Пусанри тата ытти вырăнсенчи лагерьсенчен Корея халăх çарĕн тыткăнри салтакĕсене массăллăн «ирĕке кăларнă». Вăл салтаксене, тĕрĕссипе, нейтральнăй çĕршывсен представителĕсенчен уйăрнă комисси аллине памалла пулнă.

Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен анлă массисем Ли Сын Ман ушкăнĕн çакнашкал провокацине Корейăра перемири тăвас ĕçе путлантарса лартма хăтлании пулать, тесе тивĕçлипе тĕрĕс шутлаççĕ. Инди правительствин Европăри посолĕсен Неру ертсе пынипе пулса иртнĕ конференцийĕ Ли Сын Ман ĕçне «калаçса татăласси патне çитсе тăнă килĕшĕве юри пăсма хăтланни» пулать, тесе хак панă.

Çакна ăнланса илме йывăр мар: Берлинра тата Кăнтăр Корейăра пулса иртнĕ провокацисем пĕр тĕллев — ÿссе пыракан мир вăйĕсене тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатас ĕçре кансĕрлес, çав вăхăтрах реакци вăйĕсене, вăрçă вăйĕсене вăйлатас тĕллев тытнă.

Реакциллĕ ушкăнсем çак провокацисем валли хальхи вăхăта суйласа илни ăнсăртран пулман.

Пурте пĕлеççĕ, Демократиллĕ Германи Республики тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатма тăрăшакан мирлĕ государствăсен ĕçĕсене йышăнса, юлашки вăхăтра Германин хĕвелтухăçĕнчипе хĕвеланăçĕнчи пайĕсене пĕрлешме пулăшакан чылай ĕçсем туса ирттерчĕ. Çакăнпа пĕрлех Демократиллĕ Германи Республикин правительстви халăх пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе те чылай решенисем йышăнчĕ. Демократиллĕ Германи Республики правительствин çак ĕçĕсене Германире хăйĕнче те тата ытти çĕршывсенче те пайланса тăракан Германие пĕрлĕхлĕ, демократиллĕ, мирлĕ государствăна пĕрлештерес çул çинче пысăк утăм туни пулать, тесе хакларĕç.

Аденауэр ушкăнĕпе ăна хÿтĕлесе тăракансем Демократиллĕ Германи Республики правительствин çак ĕçĕсенче Германие пĕрлештерме парас мар, Европăра мире тĕреклетме парас мар тĕлĕшпе тытса пыракан хăйсен политикишĕн хăрушă ĕç пулса тăнине курчĕç.

Ют çĕршыв провокаторĕсем нимĕçсене вăрçă çулĕ çине тăма хĕтĕртсе пыраççĕ. Вĕсемшĕн Германи — ют çĕр, вĕсемшĕн нимĕç халăхĕ — ют халăх. Çавăнпа та вĕсем нимĕç халăхĕпе усă курса хăйсен тĕллевĕсене пурнăçлама тăрăшаççĕ. Нимĕç халăхĕшĕн çакăнтан мĕнле ĕçсем килсе тухма пултарасси вĕсемшĕн пулсан пурĕ пĕрех.

Германи халăхĕн телейне пула, Европăри мир ĕçĕн телейне пула ют çĕршывсене тара кĕрĕшнĕ çынсен тăрлавсăр ĕçĕ путланса ларчĕ. Берлинра пулса иртнĕ ĕçсем Демократиллĕ Германи Республикинче демократиллĕ режим çирĕп пулнине, ăна халăхăн анлă масси пулăшса тăнине кăтартрĕç. Провокаторсем халăхăн пысăк пайне хăйсем енне çавăрма пултараймарĕç. Демократиллĕ Германи Республикинчи халăх вăйĕсем фашистла провокаторсемпе вĕсен ют çĕршывсенчи хуçисене татăклă отпор пачĕç.

Июнĕн 17-мĕшĕнче провокаци организациленĕ çынсем халĕ, хăйсен ĕçĕ путланса ларнă хыççăн, Берлинра çынсем пĕтнĕ тесе куççуль юхтарнă пек пулаççĕ. Анчах та вĕсем икĕ питленни тÿрĕ шухăшлă çынсене улталама пултараймĕ. Кама паллă мар-ха: çак ирсĕр авантюрăна организацилекен çынсем пулман пулсан, хĕвеланăç секторĕсенчен демократиллĕ сектора фашистла пуçкасансемпе провокаторсене яман пулсан, Берлинра йĕркесĕрлĕхсем те пулман пулĕччĕç, çынсем пĕтни те пулман пулĕччĕ.

Ют çĕршывсене тара кĕрĕшнĕ çынсен Берлинри авантюри путланса ларни чылайăшĕн куçĕсене, мир тăшманĕсем саракан пропагандăна ĕненекенсен куçĕсене уçрĕ. Авантюристла каварçăсен намăсла ĕçĕсене Германи халăхĕн пысăк пайĕ ылханать. Демократиллĕ Германи Республикинчи ĕççыннисем хăйсен правительстви мир тăшманĕсене ирсĕр ĕçсем тума парас мар тĕлĕшпе туса ирттерекен ĕçсене хапăл туса йышăнаççĕ. Вĕсем республика правительстви халăхăн пурнăç шайне татăклăн лайăхлатас, уйрăмах харпăрлăхлă промышленноçа, уйрăмах харпăрлăхлă суту-илĕве, аласти ĕçне вăйлатас, ялхуçалăхне çĕклентерес тĕлĕшпе туса ирттерекен ĕçсене ырлаççĕ. Миллионшар нимĕçсем çакна ăнланаççĕ: çак ĕçсем вĕсем Германи халăхĕ умĕнче тăракан тĕп задачăна — Германие мирлĕ, демократиллĕ никĕс çинче пĕрлештерес задачăна татса парассине çăмăллатаççĕ. Хăйсен тăван çĕршывне пĕрлештерессишĕн тăракан Германи халăхĕ хăйне çĕнĕ хĕн-хура кĕртме хăтланакансем хыççăн каяс çук. Вăл мир, демократи, пĕрлĕх çулĕпе пырĕ.

Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ июнĕн 21-мĕшĕнче «Хальхи лару-тăру çинчен тата унтан тухса тăракан задачăсем çинчен» йышăннă заявленире Берлинра пулса иртнĕ фашистла авантюрăна сивленипе пĕрлех, Демократиллĕ Германи Республикинче демократиллĕ режима малалла тĕреклетсе пымалли, ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатмалли майсене кăтартса панă. Çак заявленире икĕ политикăлла çул-йĕр пĕр-пĕринчен тĕпрен уйăрăлса тăнине кăтартса панă Аденауэр ушкăнĕн политики — вăрçă кăлармалли политика; Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕпе Демократиллĕ Германи Республики правительствин политики — мире тĕреклетмелли политика, Заявленире çапла каланă:

«Аденауэр, Олленхауэр, Кайзер тата Рейтер вăрçă çулĕ тытса пыраççĕ. Çавăнпа та вĕсем пирĕн çине тапăнаççĕ. Çавăнпа та Хĕвеланăç Германи фашизмпа реакци вучахĕ пулса пырать.

Пирĕн партипе правительство миршĕн тăраççĕ. Çавăнпа та эпир кăтартулла мир экономики туса хурас çул тытса пыратпăр. Пирĕн çĕнĕ çул-йĕр вăл мĕнпур нимĕçсемшĕн нимĕç çĕрĕ çинчи кирек мĕнле вăрçă провокацине те хирĕç тăмалли вичкĕн хĕçпăшал пулса тăрать».

Берлинпа Кăнтăр Корейăри ĕçсем çакна кăтартса параççĕ: мир тăшманĕсем тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатма парас мар, халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетме парас мар тесе нимĕн умĕнче те чарăнса тăмаççĕ. Çакăнпа пĕрлех ку ĕçсем тата акă мĕн кăтартса параççĕ: миршĕн кĕрешекен халăхсен вăйĕсем ÿсеççĕ тата тĕреклененççĕ, мир тăшманĕсене отпор параççĕ.

Ют çĕршывсене тара кĕрĕшнĕ çынсен Берлинри авантюри путланса ларчĕ. Мирлĕ пурнăçа юратакансен пĕтĕçуллĕхĕпе организациллĕхĕ, вĕсен кĕрешÿри пĕрлĕхĕ Ли Сын Манпа ăна хÿтĕлекенсен провокацине путлантарса лартмалли хăватлă вăй пулса тăраççĕ.

Камшăн мир ĕçĕ хаклă, çавсем пурте çак ĕçсенчен тивĕçлĕ выводсем тăвĕç, сыхлăха ывăнма пĕлмесĕр ÿстерсе пырĕç, реакциллĕ ушкăнсен каварĕсене тăр шыв çине кăларĕç, мире сыхласа хăварассишĕн тата тĕреклетессишĕн кĕрешĕве тата ытларах вăйлатĕç.

(«ПРАВДА» хаçатăн июнĕн 23-мĕшĕнчи умстатьинчен).

ПЕРЕКЕТЛЕНĔ МЕТАЛЛА

Канашри вагонсем юсакан заводра Чугун çул работникĕсен кунĕ ячĕпе ăмăрту сарăлса пырать. Тимĕрçĕ цехĕнчи Козлов мастер сменинчи рабочисем иккĕмĕш кварталти ĕç нормине срокчен тултарчĕç. А. Лежев, П. Семенов, Ф. Давыдов юлташсем çĕнĕ пилĕкçуллăхри ĕç нормине пурнăçланă.

Тележечнăй цехри рабочисем ĕç тухăçлăхне чылай ÿстернĕ, хакла металла чылай перекетленĕ. Подшипник тăвакансем пилĕк тонна баббит перекетленĕ.

И. ЖУРАВЛЕВ.

Наукăпа тĕпчев институчĕн Ученăй Совечĕн ларăвĕ

Июнĕн 23-мĕшĕнче Шупашкарта чăвашсен чĕлхе, литература тата истори тĕлĕшпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕн Ученăй Совечĕн ларăвĕ пулчĕ. И. В. Сталинăн «Марксизм тата чĕлхе вĕрентĕвĕн ыйтăвĕсем» ятлă гениллĕ ĕçĕ тухнăранпа виçĕ çул тултарнă ятпа ирттернĕ ларăва чĕлхе енĕпе ĕçлекен специалистсем, институтсен преподавателĕсем, литераторсем пухăнчĕç.

Ученăй Совет ларăвĕнче нацисен чĕлхисене аталантарасси çинчен И. В. Сталин вĕрентни тата чăваш чĕлхине вĕренсе пĕлес тата малалла аталантарас енĕпе тăракан задачăсем çинчен филологи наукисен докторĕ, профессор С. П. Горский юлташ доклад турĕ. Пренире Чăвашгосиздат редакторĕ А. И. Иванов, филологи наукисен докторĕ, профессор В. Е. Егоров, филологи наукисен кандидачĕ М. Я. Сироткин юлташсем тухса каларĕç.

Юрă уявĕ

Вăрмар поселокĕнче халăх çак вырсарникунхи пек нумай пуçнине никам та астумасть. Ĕнер каçхи поездпа килекенсем питĕ хавасланса калаçатчĕç!

— Ыран — юрă праçникĕ.

— Çĕнĕ уяв. Мĕнле пулĕ-ши?

— Паллах, лайăх пулать. Тырăсем, ав, мĕнле кашласа ÿсеççĕ, кун пек чух юрлама та кăмăллă!

Хĕрсенчен тăхăшĕ çавăнтах юрă пуçарать:

Уя тухрăм, юрă тупрăм
Уяв кунĕ юрлама.
Сар ачана эп тус турăм
Уяв кунĕ выляма.

Малтанхи сасă çумне çĕнĕрен-çĕнĕ сасăсем хутшăнаççĕ. Кĕçех пĕтĕм вагон юрлама тытăнать.

Праçник кунĕ, ĕмĕтленнĕ пекех, ыра пулчĕ. Ĕнер ирхине кăна вăйлă çумăр çуса иртнĕ те çулсем çинче нисĕта пĕр тусан палăрмасть. Сывлăш уçă. Лăпкă çил. Хĕвел те ытти кунхисенчен çутăрах, хаваслăрах пек туйăнать.

Вăрмаралла ирех мĕнпур енчен — Чупайпа Арапуç çулĕсемпе, Анаткаспа Чулкасси çулĕсемпе, Кавалпа Шăхаль çулĕсемпе — вĕçĕ-хĕррисĕр халăх куçма пуçларĕ. Машинăсемпе, лавсемпе, велосипедсемпе, мотоциклсемпе, — мĕнле май килнĕ çапла куçать халăх. Çураннисем — çуран килеççĕ, юланутлисем — юланутпа. Пурте капăр тумланнă. Вăрмар енчи çынсем, уйрăмах хĕрсем, тĕрлĕ тĕслĕ тумланаççĕ. Мĕнле кăна тĕс пур, Вăрмар енчи хĕрсен тумĕсенче çавăн чухлĕ тĕс палăрса тăрать. Хĕрлĕ те кĕрен, кăвак та сенкер, ешĕл те симĕс... Пăхатăн та вара çулпа килекен пĕр-пĕр хĕр ушкăнĕ çине, тем пысăкăш чечек çыххи куçса килнĕ пек туятăн.

Юрă уявне хатĕрленнĕ май, Вăрмар çыннисем çĕнĕ стадион уçнă. Ылтăн тĕспе ялкăшса тăракан çĕнĕ хапха çине шултра саспаллисемпе «Ыра сунса кĕтетпĕр!» тесе çырса хунă. Хапха тăрринче ярăм-ярăм шурă хăюсем ярса илемлетнĕ ешĕл-симĕс ялав варкăшать. Ку вăл — «Искра» спорт обществин ялавĕ.

Районри физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕ Михаил Кубенев çак кунсенче канăçа çухатнă. Пысăк ĕç, хĕрÿ кунсем. Юрă уявĕ çĕнĕ стадионра пулса иртмелле. Шăматкун каç кăна, эпир пырса çитнĕ чухне, стадионра грейдер ĕçлетчĕ. Вăл чупмалли çула якататчĕ. Çамрăк физкультурниксем васкасах машинăсемпе хăйăр турттаратчĕç. Чупмалли çулсене хăйăр сарса тикĕслетмелле, сикмелли вырăнсене кăпкалатмалла. Стадионăн пĕр кĕтессине районри пĕрлештернĕ хор валли ятарласа çÿлĕ вырăн туса хатĕрленĕ, ешĕл çулçăллă йывăç тураттисемпе сулхăнлатса илемлетнĕ.

Пурте хатĕр пек, анчах Кубенев лăпкă мар, унăн кăмăлĕ çырлахмасть.

— Стадиона тусах ĕлкĕреймерĕмĕр, — тет вăл. — Авă, леш енчен хÿме тытса çитереймен. Трибунăсем çук, халăха лармалли тенкелсем тăваймарăмăр. Анчах килес çулсенче эпир пурпĕрех хамăр стадионран иккĕмĕш класри стадион туса хуратпăр. Шупашкартан кая юлмастпăр.

Паянхи юрă уявĕ районри ака-туйипе пĕрле пулса иртмелле. Нумай тĕрлĕ спорт ăмăртăвĕсем пулаççĕ.

Халăх çапах Вăрмаралла куçать. Районри мĕнпур ялпосем хăйсен магазинĕсене кунти пасар площадьне куçарса килнĕ. Пасар площачĕ стадионпа юнашарах. Суту-илÿ пуçланнă та ĕнтĕ. Лавкки-лавкки пусма-тавар йăтăнса выртать. Промартельсем тĕрлĕ савăт-сапа, атă-пушмак, хуçалăхра кирлĕ нумай тĕрлĕ таварсем илсе тухнă. Колхозсем шурă çăпăхран премĕк-шушкă пĕçерсе килнĕ. Кунтах — пички-пичкипе килти сăра, сим-пыл, кăвас, тутлă шывсем.

Шăпах пасар варрине карусель вырнаçтараççĕ. Хăватлă репродукторсенчен халлĕхе Мускавпа Шупашкар юррисем шăранса юхаççĕ-ха. Кĕçех акă Вăрмар юррисем янăрама тытăнмалла.

Пасар площачĕн пĕр хĕррине трибуна лартнă. Ăна ялавсемпе, лозунгсемпе, ешĕл йывăçсемпе илемлетнĕ. Икĕ вăрăм шалча çумне паянхи юрăпа спорт ăмăртăвĕсенче мала тухакансене памалли парнесене çыхаççĕ. Кунта алă сехечĕ те, мандолина та пур, тĕрлĕ пусма-тавар та çителĕклĕ. Парнесем пурĕ пилĕк пин тенкĕлĕх ытла. Парне çыхнă шалчасем аякран тĕмĕнле чаплă чечек йывăççисем пек куранса лараççĕ.

Чечек çаранĕ!.. Трибуна çинчен пăхатăн та, площадьри нумай тĕслĕ тум тăхăннă халăх пирки урăх сăмах тупса та калама çук. Пĕтĕм площадь, пĕтĕм стадион чăннипех те чечек çаранĕ. Кашни паян — ватти те вĕтти те, яшĕ те хĕрĕ те — хăйĕн чи паха, чи капăр тумне тăхăнса тухнă.

Шăп вуникĕ сехетре районри юрă праçникне ирттерме уйăрнă комисси председателĕ М. А. Антонов уяв уçăлнă тесе пĕлтерет.

Парти райкомĕн секретарĕ В. А. Алексеев уява пухăннă ĕççыннисене сурхи уй-хир ĕçĕсене ăнăçлă туса ирттернĕ ятпа саламлать.

— Пирĕн паян савăнса юрлама сăлтавĕ те пур, — тет вăл. — Çаврăнса пăхăр-ха йĕри-тавра! Эпир акнă тырпул вăйлăн кашласа çитĕнет. Çуракине эпир вăхăтра та лайăх туса пĕтертĕмĕр. Чи паха культурăсене — тулăпа пăрçана, курăксене планран ирттерсе акрăмăр. Халĕ, тырпул çитĕнсе пынă вăхăтра, эпир чаплă уява пухăнтăмăр. Хамăрăн аслă çĕршывăмăра, хамăрăн тăван партие мухтаса, хаваслăнрах юрлар, тăвансем!

Халăх стадионалла куçать. Районри колхозсемпе шкулсен хорĕсенчен пухса пĕрлештернĕ пысăк хор хăй вырăнĕнче тăрать. Ку хорта пурĕ 250 çын ытла. Стадион çийĕн, пĕтĕм Вăрмар çийĕн Совет Союзĕн Гимнĕ янăраса каять. Пĕтĕм халăх пĕр çын пек шăп пулса тăрать.

Юрăсем пĕрин хыççăн тепри хăйсен курăнми хăватлă çуначĕсемпе сывлăшалла варкăшса çĕкленеççĕ. Пысăк хор хамăрăн аслă Тăван çĕршыв çинчен, паттăр совет халăхĕ çинчен, аслă стройкăсенчен чи малтан строя кĕнĕ Атăл-Дон каналĕ çинчен, çеçенхирсенче вăрман тăрăхĕсемпе тырпулсем кашласа ÿсни çинчен, мирлĕ те телейлĕ пурнăç çинчен юрлать. Çав юрăсене итленĕ май пире мĕнпур уй-хирсем, пĕтĕм халăх юрланă пек туйăнать. Пĕрлештернĕ хор хыççăн уйрăм колхозсенчен килнĕ хорсем, уйрăм çынсем туха-туха юрлаççĕ, ташлаççĕ, сăвăсем калаççĕ.

Эпир райком секретарĕпе Алексеев юлташпа пĕрле тăраттăмăр. Пирĕн пата кăвак сухаллă пĕр ватăрах çын пычĕ те:

— Тавтапуçах сире çакăн пек ырлăх кăтартнăшăн, — терĕ.

— Пире мар, халăха тав тумалла, — хуравларĕ Варсонофий Алексеевич. — Пĕтĕмпех халăх тăвать, халăх вăйĕ ку.

— Вăл çапли çапла-ха, — тет ватă çын. — Халăхĕ вăл ĕлĕк те пулнă, анчах пурнăçĕ кун пек пулман. Совет влаçĕ туса пачĕ çакна. Эпĕ çитмĕл тăватă çул кăна пурăнатăп-ха та, çапах хам ĕмĕрте чылай курканă. Тăратса килесчĕ паян аллă-утмăл çул ĕлĕкрех вилнисене, вĕсем хăйсем курнине хăйсем ĕненмĕччĕç.

Çак телейлĕ пурнăçа хамăр турăмăр — парти вĕрентнипе, халăх пулăшнипе.

Çак сăмахсене Кивĕ Вăрмар ялĕнчи Степан Кузьмич Кузьмин калать. Вăл — пенсионер, унччен вăл 50 çул хушши учитель пулса ĕçленĕ.

Çавăн пекех каларĕ пире Чулкассинчи «Свобода» колхоз членĕ 73 çулхи Кузьма Евдокимович Евдокимов та.

— Нихçан курманнине куртăм, — терĕ вăл хумханнă сасăпа. — Эпĕ малтан Шупашкартисем юрлаççĕ тесе шутланă, кусем — хамăр районсемех иккен. Пурăнăçсемĕн пурăнас килет, çамрăксемпе пĕрлех юрлас та ташлас килет.

Юрăсем хыççăн ака-туйипа спорт вăййисем пуçланчĕç. Программа пысăк. Анаткас çулĕ тăрăх чи лайăх лашасене сиккипе тата юртăпа чуптараççĕ. Мăнçырма çулĕ çинче велосипедистсем ăмăртаççĕ. Стадионра — гимнастика вăййисем, çăмăл атлетсен ăмăртăвĕсем. Каярахпа — кĕрешÿ. Пурне те курас килет, анчах пĕр вăхăтрах пурне те курса ĕлкĕрме çук. Халăх вара пур çĕрте те питĕ нумай.

Кăнтăрла вуникĕ сехетре пуçланнă юрă уявĕ хĕвел ансан тин вĕçленет. Паян парне илекенсем питех те нумай пулчĕç.

Сурхи уй-хир ĕçĕсене питĕ лайăх туса ирттернĕшĕн Чупайри «Дружба» колхоз парти райкомĕпе райсовет исполкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Ялав илнĕ чухне колхоз председателĕ Иван Григорьевич Григорьев, ялав хĕррине чуптуса, хăйсен колхозĕ малашне тата лайăхрах ĕçлессине шантарчĕ.

Уй-хир ĕçĕсенче малта пыракансене 149 çынна районти ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕ хисеплĕ грамотăсем пачĕ. Çул-йĕр ĕçĕнче малта пыракан нумай çынна укçан тата грамотăсем парса хисеп турĕç. Юрласа мала тухнисенчен Кивĕ Вăрмарти тата Вăрмар поселокĕнчи вăтам шкул хор коллективĕсем хаклă парнесем илчĕç. Ташлакансенчен Вăрмар вăтам шкулĕнчи пионервожатăй Роза Григорьева мала тухрĕ. Трибуна умне паянхи ăмăртусенче мала тухнисем пĕрин хыççăн тепри пыраççĕ. Акă «Искра» спорт обществин членĕ Зосим Матвеев, вăл 100 метра чупса, чи инçете тата чи çÿле сиксе мала тухнă. Ун хыççăн 1.500, 5.000 метра чупса мала тухнисем, лашасен чупăвĕнче çĕнтернисем парне илеççĕ. Çĕнтерÿçĕсен списокĕ вăрăм, парнисем те нумай.

Тĕлĕнмелле хаваслăн, тĕлĕнмелле илемлĕн иртрĕ Вăрмарти юрă уявĕ. Халиччен ку таврара уйрăм колхозсенче кăна ака-туйисем ирттернĕ. Юрă уявĕ — пачах та çĕнĕ ĕç. Вăрмарсем ăна ирттерме лайăх хатĕрленнĕ.

Мирлĕ совет халăхĕ мирлĕ ĕçпе пурăнать. Вăл Тăван çĕршыв вăй-хăватне тĕреклетме ывăнма пĕлмесĕр тăрăшать, уявсенче илемлĕн юрлать, хĕрÿллĕн ташлать.

Каç пулсан та, Вăрмар урамĕсенче унта та кунта ташă кĕввисем нумайччен илтĕнсе тăчĕç. Паянхи уявпа хавхаланнă çамрăксем лăпланма пĕлмеççĕ.

Хушăран сасартăк ватă çын сасси илтĕнсе каять:

Сакăрвунсакăр юррăм пур,
Сар сак çине сарса юрларăм...

Кăна, ахăртнех, 73 çулхи Кузьма Евдокимович юрлать. Тен, вăл та мар... Анчах паян çакăн пек юрă праçникĕсенче сакăрвунсакăр юрă мар, пин юрă та шăранса янăрарĕ пулĕ.

Авă тухăçран çутă шурăмпуç ялкăшса хăпарать. Çĕнĕ ир пуçланать, — телейлĕ ĕç ирĕ.

Аркадий ЭСХЕЛЬ.

Н. Я. Бичурин ячĕпе пулнă сесси

Кăçалхи июнĕн пуçламăшĕнче Мускавра, ССР Союзĕнчи Наукăсен Академийĕ çумĕнчи Востоковедени институтĕнче, вырăссен XIX-мĕш ĕмĕрти паллă востоковечĕ Никита Яковлевич Бичурин вилнĕренпе çĕр çул тултарнă ятпа научнăй сесси пулса иртрĕ.

Сессие кĕске сăмах каласа Наукăсен Академийĕ çумĕнчи Востоковедени институчĕн директорĕ, Сталинла премии лауреачĕ, истори наукисен докторĕ В. И. Авдиев профессор уçрĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче Н. Я. Бичурин Китайпа Монголие, Тибета тата Вăтам Азири халăхсене тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе питех те паллă ĕçсем тунине палăртрĕ. Н. Я. Бичурин Тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕ, аслă ученăйĕ пулнине кăтартса, Авдиев профессор Бичурин вырăссен китаеведени никĕсне хывакансенчен пĕри пулни çинчен тата Китай чĕлхине тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе калама çук нумай ĕçлени çинчен чарăнса тăчĕ.

Пĕрремĕш Николай патша пуç пулса тăнă йывăр самана Н. Я. Бичурин вырăссен наукипе литературинчи тата искусствинчи малта пыракан представителĕсемпе таччăн çыхăнса ĕçленĕ, вĕсен прогрессивла шухăш-кăмăлĕсемпе хавхаланнă. Хăйĕн нумай ĕçĕсенче Бичурин Китай докуменчĕсемпе усă курнă, вăл Китай чĕлхине лайăх пĕлнĕ.

Китайпа Вăтам Азие тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен ытти ученăйсем Хĕвеланăç Европăра пичетленсе тухакан кĕнекесемпе çеç усă курнă, вĕсем Китай чĕлхине вĕренсе çитеймен. Бичурин вара чăн-чăн Китай докуменчĕсем тăрăх ĕçленĕ, вĕсене сахал мар вырăсла куçарнă.

Бичурин вырăссен аслă писателĕсемпе, сăмахран А. С. Пушкинпа, час-часах тĕл пулса калаçнă, Мускавра тата Петербургра тухса тăракан литература журналĕсене активлăн хутшăннă. Ученăй çырнă статьясенче ирĕклĕх шухăшĕсем палăрнă.

Юлашкинчен Авдиев профессор Н. Я. Бичурин Россия наукине аталантарассишĕн, вырăссен востоковеденийĕшĕн ырми-канми тăрăшнине нихçан асран кайми паттăр ĕçсем вырăнне шутламалла тесе палăртрĕ.

Совет влаçĕ пуçланнăранпа совет востоковеденийĕ, марксизм-ленинизмăн аслă идейисемпе хĕçпăшалланса, нумай малалла кайрĕ. Совет востоковечĕсем Китайпа Вăтам Азие тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе нумай ĕçсем турĕç.

Авдиев профессор Азири халăхсен, уйрăмах Китай, Япони, Корея, Инди, Индонези, Вьетнам халăхĕсен экономикипе культурине тата ытларах тĕпчесе пĕлме чĕнсе каларĕ.

Сессире çак докладсене итлерĕç:

1. Н. Я. Бичурин — вырăссен китаеведени никĕсне хывакансенчен пĕри (докладчикĕ — истори наукисен кандидачĕ Л. И. Думан юлташ).
2. Н. Я. Бичуринăн пурнăçĕпе ĕçĕ (докладчикĕ — истори наукисен кандидачĕ Т. И. Тихонов юлташ).
3. Н. Я. Бичурин — Китай историкĕ (докладчикĕ — истори наукисен кандидачĕ Л. Ц. Симоновская юлташ).
4. Н. Я. Бичурин тата Вăтам Азие тĕпчесе пĕлни (докладчикĕ — истори наукисен докторĕ Н. В. Кюнер профессор).
5. Н. Я. Бичурин — аслă филолог (докладчикĕ — филологи наукисен докторĕ Б. К. Пошков профессор).
6. Н. Я. Бичурин — аслă экономист тата географ (докладчикĕ — географи наукисен кандидачĕ А. И. Стадниченко юлташ).
7. Н. Я. Бичурин ĕçĕсен монголоведенири пĕлтерĕшĕ (докладчикĕ — истори наукисен кандидачĕ Н. Ц. Шастина юлташ).
8. Н. Я. Бичуринăн пичетленсе тухман ĕçĕсем (докладчикĕ — истори наукисен кандидачĕ В. Н. Горбачева юлташ).

Çак докладсенче пуринче те Н. Я. Бичурин Российăри китаеведение аталантарас тĕлĕшпе калама çук паллă ĕçсем тунине, çавăн пекех ун ĕçĕнчи хăшпĕр çитменлĕхсемпе йăнăшсене те тĕплĕн палăртса хăварчĕç.

Пренире тухса калаçакансем Никита Яковлевич Бичурин автобиографине çырса хатĕрлеме, пичетленмен ĕçĕсене пичетлесе кăларма, унăн çамрăк чухнехи çулĕсене кăтартакан материалсене пухса пичетлеме сĕнчĕç.

Ленинградран пынă Тихонов ученăй Бичурин Некрасовпа тата Панаевпа «Современник» журнала кăларнă çĕрте, Российăри художествăсен Академийĕн президенчĕпе Оленинпа тата ытти ученăйсемпе те çыхăнса ĕçлени çинчен калакан материалсем тупнине пĕлтерчĕ.

Çавăн пекех сесси ларăвĕсене Мускаври тата Ленинградри аслă шкулсенчи ученăйсемпе студентсем йышлăн хутшăнчĕç, сăмахсем тухса каларĕç.

Сесси пулса иртнĕ çуртра Н. Я. Бичурин ĕçĕсене кăтартакан выставка уçнă. Унта Китайпа Монголи чĕлхинчен вырăсла куçарнă словарьсем, Бичуринăн Вăтам Азири халăхсен историйĕ çинчен çырнă темиçе томлă алçырăвĕсем, уйрăм ĕçĕсем тата ытти нумай материалсем пур. Халăх выставкăна кулленех нумай пырса тăчĕ.

П. ГРИГОРЬЕВ.

СĂНАВ УЧАСТОКĔНЧЕ

ЧКАЛОВСКИ. Тури Туçари вăтам шкул çумĕнчи участокра сăнав ĕçĕсем тăвассине лайăх йĕркеленĕ. Кунта вĕренекенсем 120 тĕслĕ пахча çимĕç, пĕрчĕллĕ тырă, чечексемпе йывăçсем çитĕнтереççĕ. Халĕ участокра хамăр тăрăхра акса туман культурăсем: виноград, физалис, шпинат, инжир т. ыт. те пур.

Шкул участокĕнче пахча çимĕç туса илекенсен, пĕрчĕллĕ тырăсем çитĕнтерекенсен, садоводсен тата чечек ĕрчетекенсен секцийĕсем ĕçлеççĕ. Вĕсене аслă классенче вĕренекенсем ертсе пыраççĕ. Шкул ачисем пахчара тăрăшса ĕçлеççĕ.

А. КОЗЛОВ.

Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ

БЕРЛИН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: июнĕн 21-мĕшĕнче Берлинра, Отто Гротеволь председатель пулса ертсе пынипе, Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн XIV-мĕш пленумĕ пулса иртнĕ.

Отто Гротеволь Центральнăй Комитета халăхи вăхăтри лару-тăру çинчен тата унтан тухса тăракан задачăсем çинчен доклад туса панă. Отто Гротеволь юлташ Политбюро 1953 çулхи июнĕн 9-мĕшĕнче йышăннă решенисем çинчен, вĕсен Германири тата тĕнчери пĕлтерĕшĕ çинчен ăнлантарса панă. Вонри тата Хĕвеланăç Берлинри вăрçă чĕртекенсем, халăхăн пĕр пайĕ кăмăлсăр пулнипе усă курса, Демократиллĕ Германи Республикине хирĕç тахçанах фашистла провокаци хатĕрленĕ. Çапла майпа вĕсем пĕтĕм Германире килĕшӳ тăвассине, çавăн пекех Демократиллĕ Германи Республикин правительстви халăх пурнăçĕн условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе тăвакан ĕçсене арпатса яма шутланă.

Фашистла провокацие путарса партнă хыççăн пĕтĕм партие халăх масси хушшинче, чи малтан рабочи класс хушшинче парти, правительство тата халăх хушшинче тачă çыхăну тăвас тĕлĕшпе ăнлантару ĕçне тĕплĕн туса пыни, ĕçсыннисене партипе правительствăн çĕнĕ политикине пурнăçлама, тăшмансен провокацине хирĕç активлăн кĕрешме мобилизацилени кирлĕ.

Гротеволь юлташ халăх пурнăçĕн, чи малтан рабочи класс пурнăçĕн шайне малалла хăпартса пырас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене хăвăртрăн пурнăçласа пыма кирлине ăнлантарса панă.

Центральнăй Комитет Гротеволь юлташ пĕлтернине ырланă, Центральнăй Комитет хальхи лару-тăру çинчен тата унтан тухса тăракан задачăсем çинчен пĕлтерсе каланине йышăннă. Юлашкинчен Гротеволь юлташ юлашки сăмах каланă.

Демократиллĕ Германи Республикин халăхĕ фашистла провокаторсене сивлет

БЕРЛИН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Германи Республикинчи ĕçсыннисем империалистла агентсем организациленĕ фашистла провокацие татăклăн сивлеççĕ, хăйсем Демократиллĕ Германи Республикин правительствипе Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитетне шанса тăни çинчен пĕлтереççĕ.

Республикăри халăхăн тĕрлĕ сийĕсенчен çырусем, резолюцисем, заявленисем килсе тăраççĕ. Ĕçсыннисем Демократиллĕ Германи Республикин правительстви халăхăн пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе тата Хĕвелтухăç Германипе Хĕвеланăç Германири нимĕçсем хушшинче Германие пĕрлештерес тесе килĕшӳ тума пулăшакан ĕçсене ырласа йышăнни çинчен пĕлтереççĕ.

Демиц-Тумиц хулинчи гранит заводĕнче ĕçлекенсем фашистла провокацисене хыттăн сивлесе пуху иртт ернĕ.

Бранденбургри сталеварсемпе прокатчиксем мĕнпур ĕçсыннисене Демократиллĕ Германи Республикин правительстви республикăра çирĕп йĕрке туса хурас тĕлĕшпе туса иртерекен ĕçсене пулăшма тата фашистла провокаторсене тытас ĕçре правительствăна пулăшма чĕнсе каланă.

Провокаторсем пире чăрмав кӳме хăтланнине пур майсемпе те сирсе пăрахăр, мĕншĕн тесен провокаторсем пирĕн тăшмансем пулаççĕ, тенĕ чĕнӳре.

Демократиллĕ Германи Республикинчи нумай общинăсенчи хресченсен пысăк пайĕ çырусемпе чĕнӳсенче Демократиллĕ Германи Республикин правительстви тăвакан ĕçсене ырлани çинчен тата ăна пĕтĕмпех шанса тăни çинчен калать.

Демократиллĕ Германи республикинчи следстви органĕсем Кальковский провокатора допрос туни çинчен пĕлтерни

БЕРЛИН, июнĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинăн демократиллĕ секторĕнче Хĕвеланăç Берлин агенчĕсем йĕркесĕрлĕх организациленĕ май, Демократиллĕ Германи Республикинчи хăрушсăрлăх органĕсем нумай провокаторсене арестленĕ. Следстви органĕсем июнĕн 17-мĕшĕнче арестленĕ Вернер Кальковские допрос туни çинчен çакăн пек протокол пичетлесе кăларнă. Закон хушнă тăрăх протокола тĕрĕслесе тухма допроса тăратнă çынна хăйне тĕрĕслесе тухма панă, вăл ăна çирĕплетнĕ.

Вернер Кальковский 1916 çулта Гюстровра (Мекленбург) çуралнă, нимĕç, партире тăмасть, авланнă, артист, ĕçсĕр çын. Вăл Берлинра Науниншрассе урамĕнче, 34-мĕш çуртра пурăнать.

Ыйту: Эсир Берлинăн хăш секторĕнче пурăнатăр?

Ответ: Эпĕ Берлинăн Америка секторĕнче пурăнатăп.

Ыйту: Берлинăн демократиллĕ секторĕн территорийĕнче йĕркесĕрлĕх организацилеме хăтланнă чухне сире ыттисемпе пĕрле арестлени мĕнле пулма пултарнă?

Ответ: Июнĕн 17-мĕшĕнче ирхине мана Хĕвеланăç Берлинран 90 çынтан кая мар ушкăнпа пĕрле демократилле сектора ячĕç. Эпир унта йĕркесĕрлĕх организацилесшĕнччĕ тата çак йĕркесĕрлĕхе забастовка тăвакан рабочисене хутшăнтарасшăнччĕ.

Ыйту: Ун пек тума кам задани панă сире?

Ответ: Июнĕн 16-мĕшĕнче каçхине 6 сехетре ман пата хваттере Пауль Гюнтинг пычĕ. Эпĕ ăна Гюстров хулинче пĕрле пурăннипе пĕлетĕп, халĕ вăл та Хĕвеланăç Берлинра пурăнать. Вăл мана Берлинăн демократиллĕ секторĕнче йĕркесĕрлĕх организацилес ĕçе хутшăннăшăн укçа нумай пама сĕнчĕ. Çав вăхăтрах Гюнтинг мана çапла каларĕ: демократиллĕ сектор та рабочисен пĕр пайĕ забастовка тума хатĕрленнĕ май çак йĕркесĕрлĕхсене организацилеме çăмăл пулать. Çак забастовкăран пăлхав туса ярас пулать, терĕ. Вăл каланисене итленĕ хыççăн эпĕ çак ĕçе хутшăнма хатĕрри çинчен пĕлтертĕм, мĕншĕн тесен мана укçа кирлĕ пулнă. Çак ĕçе мĕнле тумалли çинчен эпĕ тепĕр кунне ирхине тата та тĕплĕ инструкци илтĕм.

Ыйту: Çакăн çинчен тĕплĕрех каласа парăр-ха.

Ответ: Гюнтинг ман патăмран тухса кайнă чухне мана июнĕн 17-мĕшĕнче ирхине 8 сехетре Брейтенбахплаца пымалла, терĕ. Эпĕ çавăн пек турăм та. Палăртнă вăхăтра палăртнă вырăнта пултăм. Кунта мансăр пуçне сахалтан та 90 çын пухăннă. Вĕсем хушшинче Йозеф Шнейдер, Георг Герке, Рейнгольд Мароль, Рудольф Эншинский, Вальтер Хальк тата Гюнтер Нимец пурччĕ. Пухăннисен пуçĕнче Пауль Гюнтинг, Ганс Юрген тата американец Хивер пулнă. Вăл формăпа. Унăн икĕ çалтăрлă погон. Пире Гюнтинг çапла пĕлтерчĕ: пирĕн Берлинăн демократиллĕ секторне тухса каймалла, унта забастовка тăвакан рабочисем çумне хутшăнмалла, Демократиллĕ Германи Республикин правительствине вырăнтан кăларас тĕллевпе мирлĕ забастовкăран пăлхав туса ямалла.

Гюнтинг малалла пире пăлхава хастарлă хутшăнмалла тесе пĕлтерчĕ. Эпир правительство çурчĕсем çине тапанма, вут тĕртме, магазинсене çаратма, халăх полицийĕсем çине тапанма, пĕр сăмахпа каласан, власть органĕсем çине хĕспăшалпа тапанма задани илтĕмĕр.

Ун хыççăн американец Хивер сăмах каларĕ. Вăл пире çак задачăна лайăхрах пурнăçлама чĕнчĕ, çакăншăн пире кашнине висшер уйăха канма яма сăмах пачĕ. Пирĕнтен ĕçсĕр пурăнакансене пурне те çакăн хыççăн Хĕвеланăç Берлинри полицие ĕçлеме илеççĕ, куншăн укçа лайăх тӳлеççĕ, тесе пĕлтерчĕ.

Кунсăр пуçне пире кашнине вăл 50-шар марка пама пулчĕ. Ку укçана пирĕн демократиллĕ сектортан таврăннă хыççăн илмелле пулнă.

Ыйту: Эсир тата сирĕнпе пĕрле пулнисем провокацие пурнăçлас тесе демократиллĕ секторти рабочисемпе мĕн тунă?

Ответ: Йĕркесĕрлĕх организацилеме кăлартусем илнĕ хыççăн эпир ушкăнпа — Потсдам кĕперĕ урлă касса Потсдам площадьне пытăмăр. Унта эпир забастовка тăвакансем çумне хутшăнтăмăр. Çакăнтан пуçласа эпир хамăр задачăна пурнăçлама тытăнтăмăр, урăхла каласан, эпир лозунгсем кăшкăрса халăха Демократиллĕ Германи Республикин правительствипе влаçăн ытти органĕсене хирĕç кĕрешме хĕтĕртсе тăтăмăр.

Пирĕн ушкăнри 20 çыннăн бензин тултарнă бутылкăсем пулнă. Ăна вĕсем Потсдам кĕперĕ çинче Америка грузовикĕ çинчен çуртсене вут тивертме илнĕ. Тĕслĕхрен, çакăн пек бутылкăсенчен пĕрне ман куç умĕнче Гюнтер Нимец илчĕ.

Потсдам площадĕнче бензин тултарнă бутылкăсем илнĕ çынсем уйрăм çуртсене вут тĕртме тытăнчĕç. Хо магазинне (государство суту-илӳ магазинĕ.—**Ред.**) вут тĕртнине эпĕ хам куртăм. Çак çурт çине Гюнтер Нимец хăйĕн бутылкине пăрахрĕ. Кунсăр пуçне пирĕн ушкăнти çынсем нумайăшĕ халăх полицейскийĕсем çине чулсемпе пенĕ, кантăксене ватнă. Çапла майпа эпир халăх ушкăнĕпе пĕрле правительствăн Лейпцигертштрассе урамĕнчи çурчĕ патне пырса çитрĕмĕр, унта нумайччен иртĕнтĕмĕр. Кунта эпир çавăн пекех халăх полицийĕпе совет танкĕсен экипажĕсене хирĕç пăшалсенчен пеме пуçларăмăр.

Ыйту: Эсир хăвăр петĕр-и?

Ответ: Эпĕ пемен, мĕншĕн тесен манăн пăшал пулман. Анчах эпĕ Ганс Юрген револьвертан вырăс салтакне хирĕç пенине хам куртăм. Вăл вилнĕ-и, ăна эпĕ пĕлместĕп. Манăн задача Лейпцигерштрассе урамĕнче халăх ушкăнне: «Правительство тĕп пултăр!» тесе кăшкăрнипе тата ытти çавнашкал юрăхсăр лозунг кăшкăрнипе халăх массине правительствăна хирĕç тăма хĕтĕртесси пулнă.

Халăх массине хĕтĕртес ĕçре пире американецсем пысăк пулăшу пачĕç. Вĕсем кăтартса панипе секторсен чиккине икĕ пысăк репродуктор кăларса тăратнă. Вĕсем нимĕç тата вырăс чĕлхипе вĕçĕмсĕр хĕтĕртекен сăмахсем каласа тăнă. Вырăсла Антон Леффлер каланă. Вĕсем полицие вырăс çарĕсене пăлхавçăсене хирĕç нимĕн те тумалла мар, Хĕвеланăç Германие тарса каçмалла тесе чĕннĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ июнĕн 22-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче Халăх çарĕн соединенийĕсем Пенамдон районĕнче тăшманăн вăйлă атакисене ăнăçлăн сирсе янă.

Самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн пĕр самолетне персе ӳкернĕ, пĕр самолетне сиенленĕ.

ПХЕНЬЯН, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче фронтсенче артиллерирен персе тăнă.

Ĕнер çĕрле Америка самолечĕсем каллех тепĕр хут Пхеньян тата Синьыйчжу çине тискеррĕн тапаннă, бомбăсем пăрахнă. Халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур. 20 землянка ишĕлтернĕ.

Америка бомбардировщикĕсем Пхеньян çине каллех тапаннă

ПХЕНЬЯН, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Июнĕн 23-мĕшĕ умĕнхи каç Америка авиацийĕ каллех Пхеньян çине тискеррĕн тапаннă. Хула çине 10 ытла йывăр бомбардировщиксем вĕçсе пынă. Пхеньян хулин хĕвелтухăç районĕнчи Мунсукон тата Сончерон кварталĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă. Мирлĕ халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур. Землянкăсене чылай ишĕлтернĕ.

Синьхуа агентстви Ли Сын Ман ушкăнĕн провокацийĕ çинчен пĕлтерни

ПЕКИН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Цзян Нань Кэсонран çапла пĕлтернĕ.

Ли Сын Ман банди тыткăнри çар çыннисене вăйпа тытса юлас тесе ытла та чăрсăррăн хăтланма пуçланă.

Июнĕн 20-мĕшĕнче каçхине тата июнĕн 21-мĕшĕнче ирхине Ли Сын Ман банди, американецсем ирĕк панипе, тыткăнри çар çыннисем валли тунă Сан Мудан лагерĕнчен тата американецсен виçĕ лагерĕнчен вăйпа 643 çынна кăларса янă. Июнĕн 20-мĕшĕнче çĕрле Ли Сын Ман бандичĕсем Сан Мудан лагерьне танксем тата грузовиксем илсе пынă, лагерьтен тыткăнри 400 çынна лартса тухнă. Лагере Америка çарĕсем хуралласа тăнă. Анчах вĕсем Ли Сын Ман влаçĕсен çакнашкал ĕçĕсене чăрмантарас тĕлĕшпе нимĕн те туман, тыткăнри çар çыннисене машинăсем çине лартса кайнине кăна сăнаса тăнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Кăнтăр Корейăри оборона министерствин представителĕ вăйпа тытса юлнă тыткăнри çар çыннисене Ли Сын Ман çарне илесси çинчен пĕлтернĕ.

Ассошиэйтед Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 18-мĕшĕнче Сан Мудан лагерĕнчен илсе кайнă тыткăнри çар çыннисем хальхи вăхăтра Кванчжу хулинчи çар часĕсенче тăраççĕ.

Ли Сын Ман ушкăнĕ юлашки тăватă кун хушшинче тыткăнри вуншар пин çар çыннисене лагерьсенчен илсе кайса американецсен куçĕ умĕнчех Ли Сын Ман çарне илеççĕ. Çав вăхăтрах Кăнтăр Корейăри полици начальникĕ, генерал Вон Йон Дук Кăнтăр Корея çар полицийĕ хăйсен тăван çĕршывне таврăнма килĕшмен çар çыннисене пурне те «ирĕке кăларас тĕлĕшпе нимĕн умĕнче те чарăнса тăмасть», тесе пĕлтернĕ. Кăнтăр Корейăри премьер-министрĕн ĕçĕсене туса тăракан Бьон Йон Тэ генерал Марк Кларк патне июнĕн 18-мĕшĕнче янă çырăва пичетлесе кăларнă. Унта вăл: «тӳррех репатриаци туман çар çыннисене ирĕке кăларас ĕçе хирĕçӳсене йывăрлатма май парас мар йĕркепе тăвас пулать», тесе çырнă.

Америка влаçĕсем çак ĕçре Ли Сын Ман ушкăнне иртĕхме ирĕк параççĕ.

Синьхуа агентстви генерал Кларк пĕлтерни çинчен

ПЕКИН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ ĕнер Кэсонран çапла пĕлтернĕ:

Ли Сын Ман тыткăнри 26 пин çар çыннине вăйпа тытса юлнă пирки пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисем тарăхса ситнине кура, Пĕрлешӳллĕ Штатсен Корейăри хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ Марк Кларк паян çак ĕçшĕн ответлăха Пĕрлешӳллĕ Штатсен хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕнчен сирсе ярас тĕллевпе заявлени тунă.

Кларк: çак ĕçшĕн пĕтĕмпех Ли Сын Ман ушкăнĕ ответлă, тенĕ. Кларк каланă тăрăх, Ли Сын Ман çарĕсем Кларк командованийĕнче тăман пек тухать. Анчах та Кларк июнĕн 19-мĕшĕнче Ли Сын Ман патне янă çырура Ли Сын Ман çарĕсем «хăйĕн» командованийĕнче тăни çинчен каланă. Вăл кăтартса панă тăрăх, 1950 çулта Ли Сын Ман Кăнтăр Корейăри хĕçпăшаллă вăйсене Пĕрлешнĕ нацисен хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ аллине панă. Вăл çапла каланă: «савăнпа та эпĕ Корея республикин çурран çар, тинĕс-çар, сывлăш-çар вăйĕсем пĕтĕмпех ман алăра тăраççĕ, тесе шутланă тата шутлатăп та». Кларк Ли Сын Ман çарĕсене хăйĕн аллинче тытса тăрать пулсан, хăйĕн контролĕнче тăракан Ли Сын Ман ушкăнĕн айăплă ĕçĕсемшĕн ответлăха хăй çинчен сирсе яма пултараймасть.

Фактсем çакăн çинчен калаççĕ: американецсем Ли Сын Ман ушкăнне пур майсемпе те хĕтĕртсе тăнă, ăна ирĕк панă, Америкăри информаци агентствисен корреспонденчĕсем Ли Сын Ман мĕн шухăшлани çинчен Кларк тахçанах пĕлсе тăнă, тесе çыраççĕ. Хăйĕн заявленийĕнче Кларк çакна йышăннă: «Корея республикин правительстви ирĕке кăларнă тыткăнри çар çыннисем тĕлĕшĕнчен çакнашкал ĕçсем тума пултарасси паллă пулнă. Çавăн пекех Корея республикин правительствин хăшпĕр членĕсем çакăн пек тăвасси çинчен уççăн каланисем те паллă пулнă». Анчах та Кларк çакнашкал ĕçсем тума парас мар тесе нимĕн те туман. Америка çар влаçĕсем пĕлсе тăнă вăхăтрах, Ли Сын Ман ушкăнĕ тыткăнри çар çыннисене çакăн пек «ирĕке кăларни»—тыткăнри çар çыннисене вăйпа тытса юлни çинчен каламасть-и вара?

Çакна та палăртас пулать: американецсем пĕтĕм ответлăха Ли Сын Ман ушкăнĕ çине йăвантарма пăхнă вăхăтра, Ли Сын Ман ушкăнĕ американецсене мĕнле те пулин хӳтĕлесе хăварма тăрăшать. Ли Сын Ман правительствин премьер-министр ĕçĕсене туса тăракан Бьон Йон Тэ каланă тăрăх, Ли Сын Ман июнĕн 19-мĕшĕнче Кларк патне янă çырура «хăшпĕр ушкăнсем хушшинче вăрттăн килĕшӳ тунă тăрăх ирĕке кăларнă пирки çӳрекен сăмахсене сирсе ярасси» çинчен «ăнлантарса панă». Анчах та Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ июнĕн 20-мĕшĕнче Сеултан пĕлтернĕ тăрăх, Ли Сын Ман çывăхĕнче тăракан çын (вăл хăйĕн ятне никама та пĕлтерме хушман): «Эпир тыткăнри çар çыннисене ирĕке кăларни хамăр кăна тунă ĕç пулмасть», тесе каланă.

Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен килсе тăракан пĕлтерӳсем çине тимлĕн пăхас пулсан, ĕç мĕнле пулса тухнине пурте лайăх чухласа илме пултараççĕ. Юнайтед Пресс агентстви июнĕн 19-мĕшĕнче Нью-Йоркран пĕлтернинче тӳррех çапла каланă: «Ли Сын Ман тыткăнри çар çыннисене ирĕке кăларнă, анчах вĕсене хăйсен тăван çĕршывне таврăнма ирĕк паман. Тĕрĕссипе каласан, вăл Пĕрлешнĕ Нацисен командованийĕ икĕ çул хушши ĕнтĕ ерипен, анчах та законлă майпа тума хăтланнă ĕçе пĕр кун хушшинче тунă». Ассошиэйтед Пресс агентствин комментаторĕ июнĕн 18-мĕшĕнче çапла çырнă: перемири çинчен пыракан калаçусем вăхăтĕнче американецсем тыткăнри çар çыннисене ирĕке кăларассипе хăратнине Ли Сын Ман пурнăçа кĕртрĕ.

Хальхи вăхăтра Кларк «Корея республикин мĕнпур çурран çар, тинĕс-çар, сывлăш-çар вăйĕсене хăйĕн аллинче тытса тăрать» тесе калать пулсан тата вăл Ли Сын Ман ушкăнĕпе «вăрттăн майпа калаçса татăлман» тесе калать пулсан, Ли Сын Ман ушкăнĕ вăйпа тытса юлнă тыткăнри мĕнпур çар çыннисене каялла тавăрас тесе хăйĕн влаçĕпе усă курмасăр тăма нимĕнле сăлтав та çук.

Китчлу Инди халăхне чĕнсе калани

ДЕЛИ, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм Индири Мир совечĕн председателĕ доктор Китчлу Инди халăхне июнĕн 25-мĕшне Корейăри миршĕн кĕрешмелли кун тесе палăртма чĕнсе каланă.

«Миршĕн тăракансен пурин те, — тенĕ Китчлу,—çак кун тĕнчери договорсене пурте хисеплемелле тума, Корейăри тыткăнри çар çыннисем çинчен тăракан ыйтăва халех йĕркелесе яма, перемири тума ыйтас пулать».

Тыткăнри çар çыннисене Ли Сын Ман лагерĕсенчен «ирĕке кăларни» çинчен асăнтарса, Китчлу çапла каланă: çак ĕçсемшĕн пĕтĕм ответлăх ООН командованийĕ тенĕскерне тивет. «Паллă ĕнтĕ,—тенĕ малалла Китчлу, — ООН командованийĕ мĕн кирлине тунă пулсан Ли Сын Манăн çакнашкал ĕçĕсем пулман пулĕччĕç. Тыткăнри çар çыннисене халĕ те лагерьсенчен кăлараççĕ. США правительстви çар пакчĕ тума тата Кăнтăр Корейăна пулăшма шантарса калани Ли Сын Мана иртĕнтерет».

США-ра БЕНЗИН ХАКĔ ӲСНĔ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри нефть компанийĕсем бензин хакне татах ӳстернĕ. Шутласа пăхнă тăрăх, нефть илекенсен малашне çулталăкне 475 миллион доллар ытларах тӳлемелле пулать. Агентство кăтартнă тăрăх, çакă, вăл нефть хакне юлашки эрнесенче иккĕмĕш хут ӳстерни пулать.

Иракри лару-тăру

БЕЙРУТ, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Коммунистла ĕçсем тунăшăн айăпласа арестленĕ 150 çын июнĕн 19-мĕшĕнче хăйсене Багдад тĕрминчен Бакуба тĕрмине куçарнине хирĕç протестлесе забастовка пуçласа янă. Çакăн хыççăн полици тĕрмене пырса кĕрсе куççуль юхтаракан бомбăсем пăрахнă тата пăшалпа пеме пуçланă. Бейрутри радио пĕлтернĕ тăрăх, 8 çынна вĕлернĕ, 23 çынна амантнă.

Ливанра тухса тăракан «Ас-Сарха» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, çакнашкал террорла ĕç çĕршыври пĕтĕм халăха тарăхтарнă. Хулара демонстрацисем пуçланнă. Ĕçсыннисем тĕрмере ларакансем майлă пулса забастовкăсем иртт ереççĕ.

Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 20-мĕшĕнче каçхине полици демонстрантсем çине тапаннă, чылайăшне арестленĕ.

Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 21-мĕшĕнче ирхине Багдадри сăртту промышленноçĕнче ĕçлекенсем демонстраци иртт ернĕ. Çав кунах Багдадри адвокатсем политика ĕçĕсемшĕн айăпласа тĕрмене лартнă çынсене полици вĕлернĕшĕн протестлесе ĕçе тухман.

Прогрессивлă хаçатсем влаçсен çакнашкал провокациллĕ ĕçĕсем пирки хыттăн тарăхса çыраççĕ. Иракри влаçсем хаçатсене çав ĕç çинчен çырма чарнă.

СОВЕТ БАСКЕТБОЛИСЧĔСЕМ БЕЛЬГИЕ КАЙНĂ

Июнĕн 22-мĕшĕнче, Бельги федерацийĕ чĕннипе, совет баскетболисчĕсен команди Бельгие кайнă. Совет баскетболисчĕсем Бельги спортсменĕсемпе юлташла тĕл пулса выляççĕ.

Берлинра пулса иртнĕ фашистла провокацие Америка офицерĕсем хутшăннă

БЕРЛИН, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Нейес Дейчланд» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 17-мĕшĕнче Берлинăн совет секторĕнче Америка офицерĕсем ларса килнĕ автомобильсем нумай пулнă. Хаçат çырнă тăрăх, центрти нумай урамсенче тата хулан совет секторĕнчи площадьсенче американецсен ЗН 2318 номерлĕ çăмăл автомобилĕ çӳренине курнă. Ун çинче Америкăн икĕ офицерĕ пулнă. Вĕсем демонстрантсене сăтăрла ĕçсем тума тата Хĕвеланăç Берлина куçма чĕннĕ. Адлерстоф районĕнче Америкăн КВ 027192 номерлĕ автомобилĕ демонстрантсемпе çыхăну тытнă. Автомобиль çинче ларса пынă çынсем хушшинче Америка офицерĕ пулнă.

ХĔВЕЛАНĂÇ БЕРЛИНРА ГЕРМАНИРИ СОЦИАЛИСТСЕН ПĔРЛĔХЛĔ ПАРТИЙĔН РАЙОНСЕНЧИ УЙРĂМĔСЕМ ÇИНЕ ТАПАННĂ

БЕРЛИН, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер каçхине «нимĕç çамрăкĕсен союзĕ» текен фашистла организаци тата Хĕвеланăç Берлинри ытти террористла организацисен членĕсем Нейкельнра (Америка секторĕ) Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн районти уйрăмĕ çине тапаннă.

Стокгольм хули пуçланнăранпа 700 çул тултарнине уявлани

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Стокгольм хулин муниципалитечĕ Стокгольм хули пуçланнăранпа 700 çул тултарнă ятпа савăнăçлă каç иртт ернĕ. Савăнăçлă каçра хăнасем 1.100 çын пулнă.

Савăнăçлă каçра король тата король кил-йышĕ, премьер-министр Эрландер, правительство членĕсем, риксдаг депутачĕсем, муниципалитет членĕсем, дипломатиллĕ представительствăсен пуçлăхĕсемпе членĕсем, ют çĕршывсенчен килнĕ хăнасем, çавăн пекех Швеци общественноçĕн представителĕсем пулнă.

Уява иртт ерме пухăннă каçра çавăн пекех тата ĕçсынни депутачĕсен Мускав хула Совечĕн председателĕ М. А. Яснов тата Совет Союзĕн Швецири посолĕ К. К. Родионов пулнă.

Савăнăçлă пухура хула мэрĕ К. А. Андерсон тата профессор Нильс Анлунд сăмах каланă.

ИРАНРИ ЛАРУ-ТĂРУ ПИРКИ

ТЕГЕРАН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Эттелаат» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, полици июнĕн 19-мĕшĕнче ĕçсыннисен пысăк демонстрацине салатса янă хыççăн халăх халĕ те пăлханма чарăнманнине пула, Баболь хулинчи вăрçă чухнехи пек йĕрке туса хунă. Июнĕн 19-мĕшĕнче демонстраци пулнă чухне полици 6 çынна вĕлернĕ.

Баболь хулине ĕçсем мĕнле тăнине тĕрĕслеме, правительство итарласа уйăрнă комисси пырса çитнĕ.

ПАЯН «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАÇАТРА

Умстатья—Тăван çĕршывпа халăх ырлăхĕшĕн.

СССР Министрĕсен Советĕнче: СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заем (1953 çулхи кăларăм) кăларасси çинчен.

А. Шишков.—Халăх ырлăхĕшĕн тăрăшасси—Коммунистсен партийĕн чи аслă законĕ.

Тырпул пухса кĕртме хатĕрленесси çинчен.

Ют çĕршывсене тара кĕрĕшнĕ çынсен Берлинри авантюри путланса ларни («Правда», кăçалхи июнĕн 23-мĕшĕнчи умстатья).

Чăваш АССР Министрĕсен Советĕнче: Республикăра çул-йĕр строительстви çитменлĕхĕсем пыни çинчен.

Редактор заместителĕ М. Н. ЯКИМОВ.

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заем

(1952 çулхи кăларăм)

1-мĕш выляври выигрышсен тухнине кăтартакан

СПРАВКА-ТАБЛИЦА

Выляв 1953 çулхи июнĕн 21-мĕшĕнче Иваново хулинче пулнă.

Таблицăра 100 тенкĕлĕх облигацисем çине выигрышсем тухнине кăтартнă. Выигрыш суммине выляса илнĕ облигаци хакĕ те кĕрет.

Заемăн мĕнпур разрячĕсенчи çак серисемпе облигацисен номерĕсем çине выигрыш тухнă:

Сери №№	Облигаци №№	Миçе тенкĕ	Сери №№	Облигаци №№	Миçе тенкĕ
120157	20*)	1.000	129987	1—50	200
120161	08*)	1.000	130022	48*)	1.000
120226	29*)	1.000	130155	39*)	1.000
120293	1—50	200	130184	1—50	500
120542	04*)	1.000	130199	1—50	200
120558	24*)	1.000	130286	12*)	5.000
120571	1—50	500	130367	1—50	200
120671	1—50	200	130460	1—50	200
120753	08*)	1.000	130489	13*)	1.000
120956	23*)	1.000	130573	39*)	1.000
120986	08*)	1.000	130918	1—50	200
121268	21*)	10.000	131053	02*)	5.000
121336	1—50	200	131129	40*)	1.000
121362	38*)	1.000	131250	50*)	1.000
121419	46*)	1.000	131296	12*)	1.000
121537	25*)	1.000	131327	12*)	1.000
121547	49*)	1.000	131355	26*)	1.000
121636	35*)	1.000	131602	1—50	200
121652	25*)	1.000	131655	15*)	5.000
122043	29*)	1.000	131702	47*)	1.000
122215	1—50	500	131709	1—50	200
122258	1—50	500	131753	01*)	1.000
122310	11*)	1.000	131776	1—50	200
122501	49*)	1.000	131809	40*)	1.000
122938	1—50	200	132156	1—50	500
123125	1—50	200	132267	27*)	1.000
123144	26*)	1.000	132353	1—50	500
123243	16*)	1.000	132499	28*)	10.000
123344	16*)	1.000	132530	31*)	1.000
123411	02*)	5.000	132582	36*)	1.000
123440	1—50	200	132595	36*)	5.000
123517	1—50	500	132668	09*)	1.000
123622	04*)	1.000	132721	34*)	1.000
123697	1—50	200	133326	02*)	1.000
123732	39*)	1.000	133479	1—50	200
123739	1—50	200	133685	02*)	5.000
123808	1—50	500	133749	1—50	200
123906	44*)	1.000	133811	1—50	200
124073	01*)	1.000	133951	20*)	1.000
124482	45*)	5.000	133953	1—50	200
124668	22*)	1.000	134164	22*)	1.000
124673	1—50	200	134338	33*)	1.000
124790	05*)	1.000	134664	1—50	200
124868	34*)	1.000	134673	38*)	1.000
124983	1—50	200	134890	01*)	1.000
125042	12*)	1.000	135005	47*)	5.000
125064	25*)	1.000	135013	35*)	1.000
125074	1—50	500	135127	39*)	1.000
125327	1—50	500	135265	24*)	1.000
125338	30*)	1.000	135288	1—50	200
125436	1—50	200	135420	34*)	1.000
125713	07*)	1.000	135449	1—50	500
125720	1—50	500	135554	11*)	1.000
125743	45*)	1.000	135590	1—50	200
125823	1—50	200	135737	38*)	1.000
125864	1—50	200	135755	40*)	10.000
126176	1—50	500	135918	1—50	500
126221	1—50	500	136325	21*)	1.000
126475	1—50	200	136746	40*)	1.000
126639	30*)	1.000	136871	12*)	25.000
126648	1—50	200	136959	18*)	1.000
126695	06*)	1.000	137140	33*)	1.000
126696	50*)	1.000	137158	1—50	200
127091	1—50	500	137172	30*)	1.000
127134	1—50	200	137305	1—50	200
127358	17*)	1.000	137353	17*)	1.000
127383	43*)	10.000	137468	29*)	1.000
127421	1—50	200	137574	1—50	200
127710	1—50	200	137649	1—50	200
127747	1—50	500	137675	42*)	1.000
127858	02*)	1.000	137757	50*)	1.000
127917	29*)	1.000	137771	25*)	1.000
127924	17*)	5.000	137779	03*)	1.000
128003	35*)	1.000	137837	39*)	1.000
128072	08*)	1.000	138002	1—50	200
128141	1—50	200	138069	40*)	1.000
128369	05*)	1.000	138128	1—50	200
128378	14*)	1.000	138253	16*)	1.000
128585	27*)	1.000	138301	44*)	1.000
128674	38*)	1.000	138318	1—50	200
128886	22*)	1.000	138387	01*)	1.000
128930	1—50	200	138750	1—50	200
129249	25*)	1.000	138935	16*)	1.000
129376	1—50	500	139003	01*)	5.000
129435	07*)	10.000	139167	33*)	1.000
129484	1—50	500	139190	41*)	1.000
129490	02*)	1.000	139338	21*)	1.000
129528	1—50	200	139371	34*)	1.000
129672	07*)	1.000	139799	27*)	1.000
129709	1—50	200	139962	26*)	1.000
129748	1—50	500	139978	1—50	200

*) Çак серие кĕрекен облигацисен ытти 49 номерĕ 200-шер тенкĕ выляса илнĕ.

ЧĂВАШ АССР ПЕРЕКЕТ КАССИСЕМПЕ ГОСУДАРСТВО КРЕДИЧĔН УПРАВЛЕНИЙĔ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — Кизел çĕр кăмрăк бассейнĕнчи драма театрĕн гастролĕсем. Июнĕн 25-мĕшĕнче **«Ночь ошибок»**. Спектакль 20 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«РОДИНА»—июнĕн 25-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче **«Повесть о новых героях»**, ытти сеанссенче—**«Поют жаворонки»**. Сеанссем 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-04, ял хуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01428 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.